рег.149 40-92
2875

А. С. ОТАЧКИН

# ТӐВАН ЧӖЛХЕПЕ
# ВУЛАМАЛЛИ КӖНЕКЕ

*ПӖРРЕМӖШ ПАЙЕ*



Чӑваш АССР Государство Издательстви
ШУПАШКАР ★ 1940

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжной Палате
_____ __________ 1940 г.
№ 149

А. С. ОТАЧКИН

ОБЯЗАТ ЛЬНЫЙ ЭКЗЕ ПЛЯР
ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжной Палате
" 1940 г.
№ 149

# ТĂВАН ЧĔЛХЕПЕ ВУЛАМАЛЛИ КĔНЕКЕ

*ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ*

ПĔРРЕМĔШ ÇУЛ ВАЛЛИ

ВИÇÇĔМĔШ ИЗДАНИ

*Чăваш АССР Халăх Çутĕç Комиссариачĕ çирĕплетнĕ*

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1940



## Хĕллехи ир.

Ирхи сивĕ пит-куҫа
чĕпĕтет те чĕпĕтет.
Уяр, сивĕ сывлăшра
ҫуна сасси илтĕнет.
Шăннă, пăрлă йывăҫсем
шавламасăр лараҫҫĕ.
Пас айĕнчи туратсем
темле мăннăн курнаҫҫĕ.
Ял ҫумĕнчи вăрманта
кайăк сасси илтĕнмест.
Сумка ҫакнă шкул ачи
шкула чупать—ўркенмест.



## Шкула.

Хěвел йăл-йăл кулчě,
пăхрě кантăкран.
Ванюка вăл курчě,
саврě кăмăлтан.

Тăхăнчě, тумланчě
Ванюк васкаса.
Шкулалла чуптарчě
савăнса, кулса.

---

## Санăн вěренме каймалла.

Çемен пичче колхоз правленинче ларать. Правление хěрача чупса кěчě.

— Мěн-ха? Эсě мěншěн шкула кайман паян?—тесе ыйтрě унран Çемен пичче.

— Мана анне ячě... Хăй вырăнне... Ěнесем сума... Анне чирленě...

— Ěне сума? Ěнесене сансăр пуçнех сăваççě. Аннӳ вырăнне урăххи кайрě. Аннӳне çаплах кала.

— Эпě те ěне сума пěлетěп,—терě Укçине кăмăлсăр пулса.

— Саншăн кам çырăва вĕренĕ вара? Аннӳ вырăнне урăх çынна ярăпăр, сан вырăна ниепле те çын яма пулмасть.

Вара Çемен пичче пĕчĕк Укçинене шкула чупма хушрĕ.

## Ăмăрту.

Урок пуçланиччен учитель ачасене пуçтарчĕ те кашни ачан сумкине, кĕнекисене, сăмса тутрисене пăхса тухрĕ.

Паллян кĕнекисем, сумки тасах мар. Анюк чĕрнисене касмасăр пынă. Мишан сăмса тутри хуралса кайнă.

Пур ачасене те пăхса тухсан, учитель урок пуçларĕ. Кĕнекере социализмлă ăмăрту çинчен çырнине вуласа пачĕ. Вара ачасене ăмăртса ĕçлесси çинчен каласа ăнлантарчĕ.—Социализмлă ăмăртăва Ленинпа Сталин пуçарса янă,—терĕ вăл юлашкинчен. Учитель каласа пĕтерсенех, Çерук тăчĕ те: „Эпĕ Мишана ăмăртăва чĕнетĕп. Вăл шкула кая юлса çӳрет. Тетрачĕсене те таса тытмасть“,—терĕ.

Анюк ыран чĕрнисене касса, аллисене, питне-куçне таса çуса килме пулчĕ. Паллята ăмăртăва чĕнчĕ. Çапла ачасем пурте пĕрне-пĕри ăмăртăва чĕнсе ыранхи кунах шкула тап-таса килме, малашне тасалăха çирĕп тытма пулчĕç.

Тепĕр кунне ăмăрту мĕнле пынине тĕрĕслерĕç. Пĕр ача та урокран юлман, сум-

кăсемпе сăмса тутрисем пурин те таса пулнă. Хура питли, вăрăм чĕрнелли пĕр ача та пулман.

## Ăнăçлă вĕренекенсем. Вĕренӳре ударниксем, отличниксем пулар.

### Хĕл.

(Юмах.)

Хĕл мĕнпур чĕрчуна пĕтерме шут тытрĕ. Малтанах вăл вĕçен кайăксене тапăнчĕ. Анчах вĕçен кайăксем ăшă çĕре вĕçсе кайрĕç. Хĕлтен хăтăлчĕç.

Вара хĕл тискер кайăксемпе выльăхсене тапăнчĕ. Çĕре юрпа витсе хучĕ, сивĕсем яра пуçларĕ. Анчах тискер кайăксем те хĕлтен хăрамарĕç. Пĕрисен тирĕ ăшă. Теприсем тарăн йăвана кĕрсе выртрĕç. Килти выльăхсем ăшă витесенче апат çисе тăраççĕ.

Хаярланса кайрĕ хĕл. Пулăсене пĕтерме шутларĕ. Шыва шăнтма тытăнчĕ. Анчах шывĕ çиелтен çеç шăнать. Пулăсем шыв тĕпне анса выртрĕç. Пăр айĕнче вĕсене сивĕ мар.

Хайхи хĕл çынна тапăнчĕ. Пӳртсене шаккать, мăръесенче улать. Çынсем кăмака

хутса ячĕç. Ăшă пӳртре лараççĕ, хĕлтенех кулаççĕ.

Пĕчĕк ачасем те хĕлтен хăрамаççĕ. Çунашкапа, конькипе ярăнаççĕ. Юрпа выляççĕ, юртан тăвайкки купалаççĕ. Шыв сапаççĕ. Хĕле хăйсене пулăшма чĕнеççĕ.
—Тăвайккине шăнтса пар, сивĕ мучи,—теççĕ.

*Шурă çитти пĕтĕм хире витсе хучĕ.*

## Çапла-и, çапла мар-и?

Урай çинче труба ларать—
тĕтĕме туртать.
Пӳрт тăрринче кăмака ларать—
пӳрте ăшăтать.

## Конькипе.



Вĕçсе пырап конькипе—
хăлхасем хĕп-хĕрлĕ.
Чăр-чар чĕрсе пынипе
пăр çийĕ пит йĕрлĕ.
Йăлтăр-ялтăр çиçĕм пек
йăр та яр пыратпăр.
Алла-алăн тытăнса,
савăнса ярнатпăр.
Астумасăр хăш чухне
такăнса ӳкетпĕр.
Кĕç тăратпăр та каллех
çиçĕм пек вĕçетпĕр.

## Кая юлчĕç.

Ачасем ушкăнпа шкула каяççĕ. Акă шкул патне çывхараспа вĕсем юрпа выляма тытăнчĕç. Пĕрне-пĕри юр чăмăрккисемпе переççĕ. Юр чăмăрккисем вĕлт те вĕлт çеç тăваççĕ.

Хĕрсе кайнипе, ачасем чылайччен вылярĕç. Вăйă хушшинче вĕсем шкул çинчен мансах кайнă. Шкула чупса çитеççĕ те, унта уроксем пуçланнă.

Вăйă пирки ачасем урокран тăрса юлнă.

— Ачасем, вăйă пирки урокран тăрса ан юлăр. Вĕренекенĕн, рабочи пекех, ĕçе вăхăтра тытăнмалла,—терĕ учитель.

*Вĕренекенĕн, рабочи пекех, ĕçе вăхăтра тытăнмалла*

## Ёлка.



Эх, хаваслă ёлка, курăр,
çап-çут çăлтăр йăлкăшать.
Айтăр юрлăр, юрлăр юрă,
мутхăр капăр ёлкăна.

Пĕлĕт тăрă... тăрă... тăрă...
Самолĕчĕ ярăнать.
Вăрман урлă, уй-хир тăрăх
вĕçтерсе эс яр ăна.

Тавраллах ак ешĕл курăк.
Шухăшлатăн: чăн çуллах.
Саламлатпăр чăн-чăн урăх
çĕн телейлĕ çĕн çула.

Эх, хаваслă ёлка, курăр,
çап-çут çăлтăр йăлкăшать.
Айтăр юрлăр, юрлăр юрă,
мухтăр капăр ёлкăна.

## Пирĕн ёлка.

Пирĕн ёлка питĕ капăр,
симĕс, симĕс йĕпписем.
Çĕн çул касĕ савăнатпăр
эпир—çамрăк ачасем.

Ёлка, ёлка, эсĕ килтĕн
пысăк, аслă вăрмантан.
Çĕн çул касĕ эсĕ çитрĕн,
пире саврăн кăмăлтан.

Ав мĕн чухлĕ тутлă çимĕç,
ав мĕн чухлĕ кучченеç.
Теттӳсем сан хĕрлĕ, симĕс,
пире савăнăç кӳреç.

Сана пурте пит саватпăр,
эпир санăн хăнусем.
Халь вылятпăр, халь юрлатпăр,
халь ташлатпăр ташăсем.

## Шывран кĕленче туни.

Ачасем шкул килхушшинче юртан пўрт тума тытăннă. Стенисене тунă, тăррине витнĕ. Кантăкĕсем çеç çук.

— Кантăкĕсене мĕнрен тăвас?—теççĕ.

Кантăкĕсене шывран тума шутларĕç.

Мĕтри калать:

— Кантăкне тĕрлĕ тĕслĕ тума пулать. Айтăр шыв çине сăрă ярса шăнтар,—тет.

Ачасем икĕ листа тимĕр татăкĕ илчĕç, хĕррисене тавăрчĕç. Тимĕр листасем çине шыв ячĕç. Пĕр листи çине хĕрлĕ сăрă, тепри çине синька ярса хутăштарчĕç. Листисене сивĕ çĕре лартрĕç. Шыв шăнса ларчĕ.

Тепĕр кунне шăннă пăра уйăрса илме тăчĕç, анчах пăрĕ уйăрăлмасть. Тимĕр листисене пўрте илсе кĕчĕç. Пăр кăшт ăшăнсан, ачасем листисене ўпĕнтерчĕç те, пăрĕ кăлт анчах тухса ўкрĕ.

Кантăк пулса та тăчĕ.

Ачасем юртан тунă пўрте тĕслĕ кантăксем лартма чупрĕç.

## *Мĕн вăл?*

*Вутра та çунмасть,*
*шыва та путмасть.*



## Çунашка.

Манăн çунашка çукчĕ. Эпĕ аттене çунашка туса пама ыйтрăм. Атте мана часах пĕр пĕчĕк çунашка туса пачĕ.

Вăл ултă хăма илчĕ, пăтасем хатĕрлерĕ. Тупан тумалли хăмасен пĕр пуçне пăчкăпа чалăшла татрĕ. Кĕтессисене касса çаварчĕ.

Унтан тупанĕсене картса, çине тăватă хăма хурса тухрĕ. Мана хăмисене пăтапа çапса лартма хушрĕ.

Кантăра çыхма икĕ тупанĕнчен икĕ ункă çапса лартрĕ. Çунашка пулса та тăчĕ.

## Платниксен юрри.

Хӑмасене касатпӑр,
ирех ҫапла ӗҫсем:
ҫивӗчӗ пӗчӗк пӑчкӑ
ҫӑмӑл пырать вӗҫсе.
Кӑшӑл-кӑшӑл ту,
тук-тук-тук!
Чупать сава канмасӑр,
якатать йывӑҫа,
ҫавра шап-шур турпасӗ
ӳкет кустаранса.
Кӑшӑл-кӑшӑл ту,
тук-тук-тук!
Ай-ну, тата хавасрах,
вылятӑр пуртӑра,
пӑта ҫапӑр хытӑрах,
часрах лартӑр клуба.
Кӑшӑл-кӑшӑл ту,
тук-тук-тук!

## Урамра.

Пит те лайӑх урамра
ҫемҫе юрпа вылямa,
таса, уҫӑ сывлӑшра
кула-кула шавлама.
Айтӑр, ҫамрӑк тантӑшсем,
тӑвайккине якатар,
хаваслансa, юрласа,
вӗҫе-вӗҫӗн ярӑнар.

# Хĕллехи тумтир.

Çанталăк ытла та сивĕ. Тула тухсанах сăмсана çатăр чĕпĕтсе илет.

Пирĕн атте вăрмана кайма хатĕрленет. Ăшă кĕрĕк тăхăнчĕ. Кĕрĕк çинчен ăçам тăхăнчĕ, хĕрлĕ пиçиххипе туртса çыхрĕ. Пуçне çĕлĕк тăхăнчĕ, аллине алса тăхăнчĕ. Ытти колхозниксемпе пĕрле вăрмана тухса кайрĕ.

Эпир те аппапа шкула кайма хатĕрлентĕмĕр.



Аппа çăмата, кĕрĕк тăхăнчĕ. Пуçне хулăм тутăр çыхрĕ. Эпĕ кĕрĕк тăхăнтăм. Пуçа çĕлĕк тăхăнтăм, мăя шарф çыхрăм. Алшиш тăхăнса ятăм. Халь ĕнтĕ шăнмастпăр, шкула аванах çитетпĕр.

**Тупмалли юмах:** Турчка пек кукăр, çӳпçе пек хăвăл.



## Юртан кĕлетке туни.

Хĕл пулса çитрĕ. Йĕри-тавра юр сарăлса выртать. Çанталăк сивех мар.

Çемçе юрпа выляма питех те аван. Ачасем, урама тухса, пĕр-пĕрне юрпа персе выляма пуçларĕç.

Акă Ваççа юрпа пеме пăрахрĕ те:

— Айтăр, юртан çын кĕлетки тăвар!— терĕ.

Ваççапа пурте килĕшрĕç. Юра йăвалаcа купалама тытăнчĕç. Ачасен аллисем шăнаççĕ, анчах çын кĕлетки пулса пыни вĕсене хавхалантарать.

Пысăк çын кĕлетки туса хучĕç. Кĕлеткен пуçĕ те пур, аллисем те пур. Куçĕсене кăмрăкран турĕç.

## Ăшăтман кĕрĕк.

Кил хушшинче юртан тунă çын кĕлетки тăрать.

— Ку кĕлетке тумтирсĕр шăнать пуль,—

тет Анюк.—Кĕрĕк тăхăнтарсан ăшăнмĕши?—тет.

— Айтăр, сăнаса пăхар!—терĕç ачасем.

Кĕлеткене кĕрĕк тăхăнтартрĕç. Хăйсем юрпа выляма тытăнчĕç. Нумайччен вылярĕç. Унтан кĕлетке çинчен аса илчĕç те ун патне чупса пычĕç. Хыпаласа пăхасçĕ—вăл çаплах сивĕ тăрать.

— Ак япала,—тет Анюк. — Ма кĕрĕк ăшăтмасть-ха ăна?—тет.

— Сана та ăшăтмасть вăл, — тет Кавруç.

— Апла пулсан, хĕлле мĕншĕн кĕрĕк тăхăнаççĕ?— тесе ыйтать Анюк.

— Ăшă тытма,—тесе ăнлантарать Кавруç.—Кĕрĕк хăй ăшă памасть, вăл çын ăшшине çеç тытса тăрать. Пирĕн юртан тунă кĕлеткен хăйĕн ăшши çук. Çавăнпа вăл, кĕрĕк тăхăнтарнă пулин те, сивĕ.

*Мĕн вăл?*

*Вĕçет - чĕнмест,*
*выртать - чĕнмест,*
*вилсен шавлать,*
*чарăна пĕлмест.*

## Ванюк кĕпи.

Çуркунне колхозниксем йĕтĕн акрĕç. Йĕтĕн сип-симĕс шăтса тухрĕ те ӳсме тытăнчĕ.

Çулла йĕтĕн çитĕнсе çитрĕ, саралчĕ. Ăна татса çыхса хучĕç. Вăррине çапса илчĕç. Унтан йĕтĕн çурăмĕсене сулă туса шыва хутрĕç. Шывра йĕтĕн шӳсе кайрĕ. Сӳсĕ шăмминчен уйрăлма пуçларĕ. Вара колхозниксем йĕтĕне шывран кăларса типĕтрĕç.

Типсе çитсен, йĕтĕне тылларĕç. Малтан колхозниксем государствăна йĕтĕн памалли плана парса татрĕç. Унтан ăна ĕç кунĕпе уйăрчĕç. Вара колхозницăсем йĕтĕне хĕлĕпех арларĕç. Ванюк амăшĕ те хĕлĕпех арларĕ. Унтан пир тĕртрĕ. Çуркунне пире юр çине сарса шуратрĕ, çуса тасатрĕ. Вара шап-шурă пиртен Ванюка кĕпе çĕлесе пачĕ.

## Йĕлтĕрпе.

Кăвак пĕлĕт янкăр тăрă;
шуса тухрăм эп уя.
Вĕçрĕ йĕлтĕр хир-вар тăрăх,
вылянать алри туя.

Питĕ хăвăрт уй-хир çийĕн
ыткăнатăп малалла.



Чĕлтĕр-чĕлтĕр юр пĕрчийĕ
ăмăртасшăн манпала.

Кăпăш юрлă хир шап-шурă,
вăрман çеç лере хура.
Эп юрлатăп çĕнĕ юрă,
хĕл хаваслăхне кура.

Шур пĕркенчĕклĕ хир аслă,
эх, саватпăр-çке ăна!
Мĕн чул савăнăç, хаваслăх
илсе килчĕ хĕл-хăна!

## Юр айне пулнă çын.

Тимахви вăрмана вутă тиеме кайнă. Çул çинче вăл ыттисенчен кая юлнă. Çав хушăра çил-тăман тухнă. Тимахви çул çухатнă.

Тимахви çул шырама кайнă. Тем чул шырасан та тупайман. Унăн вăйĕ пĕтсе çитнĕ. Вăл юр çине кайса ўкнĕ те, ăна юр хĕвсе лартнă.

Лаши Тимахвие кĕтсе тăнă-тăнă та ялалла утнă.

Килтисем пăхаççĕ—лаша пур, Тимахви хăй çук. Тимахвие шырама каяççĕ, анчах тупаймасăрах таврăнаççĕ.

Тепĕр ирхине пĕр кайăкçă кайăка кайнă. Чипер пынă çĕртех унăн йытти çултан пăрăнса кĕнĕ те юра чавма тытăннă. Кайăкçă йытă мĕн тупнине пăхма пынă. Курать—йытă чавнă шăтăкран пăс тухать. Кайăкçă хăй те чавма тытăнать. Кăшт чавсанах юр айĕнче çын выртнине курать. Вара вăл шăтăка каллех юрпа витсе хурать те яла васкаса чупать.

Ялта халăх пухăнчĕ, çынсем кайăкçă кăтартнă вырăна кайрĕç. Унта Тимахвие юр айĕнчен чавса кăларчĕç те килне илсе пычĕç. Анчах ăна тӳрех пӳрте илсе кĕмерĕç. Малтан ăна тулта нумайччен юрпа йăваларĕç. Пĕр-ик сехетрен Тимахвие ăн кĕчĕ те, вăл çимелли ыйтрĕ.

## Колхозниксен хĕллехи ĕçĕсем.

Колхозниксем тырпула хиртен пуçтарса кĕнĕ. Ăна çапса, сăвăрса кĕлете хунă. Халь вĕсем çав тырра армансенче авăртаççĕ. Йĕтĕн, кантăр вăрринчен çу кăлараççĕ.

Хĕрарăмсем сӳс, çăм арлаççĕ, чăлха, алшиш çыхаççĕ.

Выльăхсен хĕлле хире тухмалли çук, вĕсене килтех çитерсе усраççĕ.

Юр ӳксенех, колхозниксенчен чылайă-шĕ вăрман касма кайрĕç. Ман пичче автомобиль заводне ĕçлеме кайрĕ.

## Хĕллехи каç.

Хĕвеланăç хĕрелет,
вăш-вăш сивĕ çил вĕрет,
кăпка юра вĕçтерет,
çула тăрăх юхтарать.
Çул хĕрринчи лакăмсем
питĕрĕнчĕç юрпала.
Вăрмансенчи кайăксем
кĕрсе ларчĕç йăвана.
Кĕске хӳре мулкачă
сирпĕнтерчĕ çырмана.
Ытла сивĕ тивесрен
кĕрт хушшине пытанма.
Кушак пуçлă тăмана,
ыйăхĕнчен вăранса
лапăстатрĕ ялалла
чăх-чĕп тавраш шырама.

## Икĕ колхозник.

Антунпа Якур колхозра тăраççĕ. Антун питĕ ĕçчен, ĕçе яланах вăхăтра тухать. Хушнă ĕçе тĕплĕн тăвать. Яланах тăрăшса ĕçлет. Вăл—ударник.

Якур ӳркенсе ĕçлет. Ĕçе пуринчен кайран тухать. Хăш кун пĕрре те тухмасть.

Кĕркунне çитрĕ. Колхозниксем кам мĕн чухлĕ ĕçлесе илнине пăхма пуçларĕç.

Якурăн ĕç кĕнеки çине ĕçкунĕ сахал çырнă.

— Мĕншĕн капла?—тет Якур çиленсе.

— Эсĕ ĕç вăхăтĕнче мĕн турăн? Миçе кун çывăрса ирттертĕн? — тесе ыйтрĕ Антун.

— Сан ĕç çук унта.

— Пăх-ха, сан кĕнекӳ çине мĕн çырнă.

Якур вуласа пăхрĕ: **Кам ытларах ĕçлет, çав ытларах илет. Мĕн чухлĕ ĕçлен, çавăн чухлĕ илен.**

## Владимир Ильич Ленин.

Стена çинче Ленин сăнĕ çакăнса тăрать. Ваççа ашшĕне калать:

— Атте, мана ун çинчен каласа парха,—тет.

— Эсĕ пĕлетĕн-и, кам вăл?—тет ашшĕ.

— Пĕлетĕп, вăл—Ленин,—тет Ваççа.

— Çапла, вăл Владимир Ильич Ленин. Пирĕн юратнă, пирĕн тăван аслă çулпуçăмăр.

Итле. Ĕлĕк рабочисене пурăнма питĕ йывăрччĕ. Рабочисем иртен пуçласа каçченех ĕçлетчĕç. Укçи çавах тăранма çитместчĕ.

Завод хуçи нимĕн те ĕçлеместчĕ. Хăй питĕ пуян пурăнатчĕ. Вăл рабочисем ĕçленипе пуйса пынă. Рабочисене нумай ĕç-

леттеретчĕ, укçине сахал паратчĕ. Рабочисене çаратса пуйăнатчĕ.

Ĕлĕк пире те, хресченсене, пуйăнма питĕ хĕсĕк пулнă. Пирĕн çĕр сахал пулнă.

Лайăх çĕрсем кулаксен, помещиксен аллинче пулнă.

Помещиксемпе капиталистсем пĕр канашлă пуйăннă. Вĕсемпе тата патша пĕр канашлă пулнă. Патша вăл чи пуян помещик пулнă. Патша пурне те хăй аллинче тытса тăнă. Вăл помещиксемпе капиталистсене пуйма пулăшнă. Рабочисемпе хресченсене пусмăрта тытса тăнă.

---

Ленин—рабочисен тусĕ, çывăх юлташĕ пулнă. Вăл ĕçхалăхне патша йĕркине çĕмĕрме чĕннĕ. Кам ĕçлет, ун пуйăнăçĕ лайăх пултăр, тенĕ Ленин. Вăл рабочи ĕçĕшĕн кĕрешнĕ.

Ленин рабочисемшĕн тăрăшакансене пĕрлештерсе пынă. Ун пеккисем нумайлансах пынă. Рабочисен партийĕ—коммунистсен партийĕ—ўссе, çирĕпленсе пынă. Кĕрешмесĕр, çапăçмасăр нимĕн те тăваяс çуккине парти лайăх пĕлсе тăнă. Кăна пĕтĕм тĕнчери рабочисем те ăнланма пуçланă.

Рабочисем Ленина юратнă. Помещиксемпе капиталистсем Ленина курайман. Патша жандармĕсем Ленина тĕрмене те хупнă. Аякри Çĕпĕре ссылкăна янă. Ăна ĕмĕрлĕхех тĕрмене хупасшăн пулнă. Анчах Ленин ют çĕршыва тарнă. Унтан вăл рабочисене мĕн тумаллине çырса вĕрентсе тăнă.

Вара унтан таврăннă та пĕтĕм кĕрешĕве ертсе пынă.

---

1917-мĕш çулта рабочисем, хресченсемпе пĕрле, патшана, помещиксене, капиталистсене хăваласа янă. Фабрикăсемпе заводсене, çĕре туртса илнĕ. Пирĕн çĕршывра совет влаçĕ туса хунă. Çакăнтан вара рабочисемпе хресченсем советсем урлă хăйсен ĕçне хăйсем туса пыма пуçланă.



Ку рабочисемпе хресченсемшĕн çĕнĕ ĕç пулнă. Вĕсене Ленинпа унăн партийĕ ертсе пынă, çĕнĕ пурăнăç тума пулăшса пынă.

Ленин нумай ĕçленĕ. Йывăр ĕçпе унăн сывлăхĕ начарлансах пынă. 1924-мĕш çулта Ленин вилнĕ.

---

Питĕ хытă кулянтăмăр эпир, Ваççа, Ленин вилнĕшĕн. Вăл каланисене эпир нихăçан та манас çук. Эпир пур ĕçе те Ленин хушса хăварнă пек туса пыратпăр. Çĕнĕ пурăнăç тăватпăр.

Шкулта сана Ленин çинчен тата тĕплĕрех каласа парĕç. Эпĕ те ун çинчен пĕрре анчах мар каласа парăп сана, каламаллисем тата нумай,—терĕ Ваççана ашшĕ юлашкинчен.




## 1924-мĕш çулти январĕн 21-мĕшĕ.

Владимир Ильич Ленин 1924 çулти январĕн 21-мĕш кунĕнче Мускав çывăхĕнчи Горки ятлă ялта вилнĕ.

Ленина Мускавра пытарнă. Вăл кун ĕççыннисем Ленина юлашки хут ăсатма пуçтарăннă.

Ленин тупăкне мавзолея антарнă чухне пур фабрикăсемпе заводсем хурлăхлăн кăшкăрнă. 5 минута хушши çул çинче пыракан трамвайсем, поездсем, çурран пыракансем чарăнса тăнă. Пур çĕрте те электричество сӳннĕ.

Пилĕк минута хушши пĕтĕм çĕршыв шăп пулнă. Мĕнпур ĕççынни аслă çулпуçне асăнса чĕререн хурланнă.

*Ленин вилнĕ. Унăн ĕçĕ чĕрĕ. Вăл вĕрентсе хăварнисене эпир манмастпăр.*

## Иосиф Виссарионович Сталин.

Кам пĕлмест Сталин юлташа? Ăна пурте пĕлеççĕ. Рабочисемпе работницăсем те, колхозниксемпе колхозницăсем те, баттисемпе çамрăккисем те, вырăссемпе вырăсмаррисем те—пурте ăна чунтан юратса тăван тесе хисеплеççĕ.

Сталин—рабочи ывăлĕ, грузин. Вăл Кавказра, Грузире, çуралса ӳснĕ. Ачаранах вăл пур халăхсен рабочийĕсемпе хресченĕсене те патша, помещиксем тата капиталистсем пусмăрласа пурăннине нумай курнă. Çамрăклах вăл вĕсем тунă йĕркесене хирĕç кĕрешме тытăннă. Вăл Ленинпа пĕрле тата унăн юлташĕсемпе, рабочисемпе пĕрле кĕрешнĕ.



Сталин çамрăк чухне.

Иосиф Виссарионович Джугашвилие — Сталинăн хушамачĕ çапла пулнă — патша правительстви тем пекех курайман, полици ун хыççăн пĕрмаях йĕрлесе çӳренĕ. Çавăн пирки Сталинăн темиçе тĕрлĕ ятпа та пурăнма тивнĕ. Юлташĕсем ăна е „Девид“, е „Коба“, е тата урăх ятпа та чĕннĕ.

Патша вăхăтĕнче Сталин юлташа темиçе хутчен те тĕрмене хупа-хупа лартнă, инçетри çĕршывсене ссылкăна янă. Анчах Сталин кашниччех тарма тăрăшнă. Тарса таврăннă хыççăнах вăл каллех революци ĕçне ĕçлеме тытăннă. Сталин юлташ çамрăклах хастар та паттăр революционер пулнă.

Сталин Ленинăн чи çывăх юлташĕсенчен пĕри пулнă. Революциччĕнех Сталин Ленинпа уйрăлми çыхăннă, революци хыççăн вĕсем пĕр-пĕринпе тата та тачăрах тăрса ĕçленĕ.



1917 çулта рабочисемпе хресченсем, улпутсемпе капиталистсене хăваласа ярса, Совет влаçĕ туса хучĕç. Анчах ĕçхалăхĕн тăшманĕсем ирĕклĕнех парăнасшăн пулмарĕç. Вĕсем пĕтĕм тĕнчери буржуази пулăшнипе çĕнĕ власть çине вăрçăпа килчĕç. Темиçе çул хушши çапăçмалла пулчĕ çавăн чухне тискер буржуазипе. Ленинпа Сталин тĕрĕс ертсе пынипе, Совет влаçĕ вăл вăрçăран çĕнтерсе тухрĕ.

---

Ленин вилнĕ хыççăн коммунистсен партине Сталин пит çирĕппĕн, тĕрĕс ертсе пырать. Аслă çулпуçĕ, çывăх юлташ — Сталин ертсе пынипе юлашки çулсенче Совет Союзне малта пыракан çĕршыв тăвас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тунă. Совет Союзĕнчи ĕçхалăхне пуян та культурăллă пурăнмалла тăвас тĕлĕшпе паллă çитĕнӳсем

тунă. Эпир халĕ, ĕмĕтре мар, чăннипех те социализмлă пурăнăçпа пурăнатпăр.

Эпир кивĕ фабрикăсемпе заводсене юсаса çĕнетрĕмĕр. Ĕлĕкхисенчен темиçе хут пысăк çĕнĕ заводсем темĕн чухлех туса лартрăмăр. Вĕсенче халь хĕрӳллĕ ĕç пырать. Ĕлĕк чухăн, выçлă-тутлă пурăннă хресченсем халĕ колхозсенче пуян пурăнăçпа пурăнаççĕ. Ачасемшĕн те халĕ пурăнăç ĕлĕкхинчен темиçе хут лайăх. Пур çĕрте те яслĕсем, ача сачĕсем, ача çурчĕсем пур. Ачасем пурте вĕренеççĕ. Ĕлĕк вĕренмесĕр юлнă çитĕннĕ çынсем те халь хăйсен хут пĕлменлĕхне пĕтереççĕ. Ялсенче радио, кино, театрсем, клубсем, библиотекăсем пур. Кашни халăх хăйĕн чĕлхипе ирĕклĕн калаçать, кашни халăх хăйĕн чĕлхипе кĕнекесем, хаçатсем, журналсем кăларать.

Хамăр çитĕнӳсене эпир социализмлă пурăнăçăн тĕп законĕ çине—çĕнĕ Сталинла Конституци çине çырса хутăмăр. Çак Конституцие тăвас ĕçе Сталин юлташ ертсе пычĕ.

Ытти çĕршывсенчи рабочисемпе хресченсем пирĕн пурăнăçа курса савăнаççĕ. Вĕсем хăйсен çĕрĕсенче те пирĕнни пекех ирĕклĕ пурăнăç тăвасшăн, анчах помещиксемпе капиталистсем вĕсене пусмăртах усрама тăрăшаççĕ. Тĕнчери капиталистсем Совет влаçне тем пек пĕтерсе хурĕччĕç, анчах пултараймаççĕ. Пирĕн Хĕрлĕ Çар вăйлă,

вăл пирĕн çĕршыв çине тапăнма никама та парас çук. Вăл лайăх хĕçпăшалланнă. Пирĕн самолетсем нумай. Пире вăрçă кирлĕ мар, анчах пирĕн çине кам та пулин тапăнас пулсан, эпир хамăрăн çĕршывăмăра сыхлама кирек хăçан та хатĕр.

Телейлĕ пурăнăçпа пурăнаççĕ пирĕн çĕршывра ĕççыннисем, хĕрӳллĕ саламлаççĕ Сталин юлташа. Эпир те, ачасем, тĕнчери ĕççыннисен çулпуçне—Сталин юлташа—пысăк салам ярăтпăр.

## Сыхлăхра.

„Пире ют çĕр пĕр пусăм та кирлĕ мар, анчах хамăр çĕре те, хамăрăн пĕр вершук çĕре те никама та парас çук“,—тенĕ Сталин юлташ.

— Парас çук,—терĕç рабочисем.

— Парас çук,—терĕç колхозниксем.

— Парас çук,—терĕ мĕнпур ĕçхалăхĕ.



Пирĕн Хĕрлĕ Çар пуçĕнче ССР Союзĕн Оборона комитечĕн председателĕ, Совет Союзĕн маршалĕ Ворошилов юлташ тăрать. Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе пирĕн Хĕрлĕ Çар никам çĕнтерейми вăйлă çар пулса тăчĕ.

Пирĕн тăван çĕршыв çине тăшман килсе тапăнас пулсан, Хĕрлĕ Çар çав тăшмана çапса салатма яланах хатĕр.

## Паттăр Хĕрлĕ Çар.

Октябрь революцийĕ хыççăн ĕçхалăх тăшманĕсем, тĕнчери буржуази пулăшнипе, совет влаçне пĕтерме тăрăшрĕç. Пирĕн çине ют çарсем ярса тăчĕç. Патша генералĕсем, тĕрлĕ тăшмансем рабочисемпе хресчENсене каллех хăйсен чурисем туса хурасшăн пулчĕç.

Пирĕн çамрăк çĕршыв çине ун чухне ют çĕршыв çарĕсем темиçе хутчен тапăнчĕç. Анчах пирĕн Хĕрлĕ Çар тĕнчери буржуази çарĕсене çапса çĕмĕрчĕ. Вăл çарсен юлашкисене пирĕн çĕршывран хăваласа кăларчĕ.

Унтанпа пирĕн Хĕрлĕ Çар тата нумай вăйлăланчĕ. Пирĕн Хĕрлĕ Çарăн халь хĕçпăшал, апат-çимĕç, тумтир, лашасем çителĕклĕ. Пирĕн Хĕрлĕ Çар, тĕнчери буржуазин мĕнпур çарĕсем тапăнсан та, вĕсене çапса салатма хатĕр.

Хĕрлĕ Çара 1918-мĕш çулти февралĕн 23-мĕшĕнче Ленинпа Сталин пуçарса янипе тунă.

Çирĕп пирĕн Хĕрлĕ Çар.
Хамăр çĕршыва сыхлама пур ĕçхалăхĕ те хатĕр.
Пурте пĕр çын пек пулса,
хамăр çĕршывăн сыхлăхне вăйлатар!



## ВОРОШИЛОВ ПАТНЕ ЯНӐ ҪЫРУ.

Ҫыру ҫыртӑм эпӗ
Ворошилова:
Юлташ Ворошилов,
Халӑх комиссарӗ!

Пысӑк телей килчӗ
пирӗн ҫемьене,
Хӗрлӗ Ҫара илчӗҫ
манӑн пиччене.

Юлташ Ворошилов,
эп ӑна савап:
пичче ҫирӗп сыхлӗ
тӑван ҫӗршыва.

Ман тӑван пиччемҫӗм
Ҫар ретне тӑрсан,
юлташ Ворошилов,
савнӑҫ пулӗ сан.

Юлташ Ворошилов,
вӑрҫӑ пуҫлансан,
манӑн пиччене эс
мала тӑратсам.

Эс пеме хушсассӑн
тӑшмансем ҫине,
ун чух хӑвах курӑн
вӑл тӗл пенине.

Юлташ Ворошилов,
ман пичче вилсен,
эс мана пит хӑвӑрт
пӗлтер ун ҫинчен.

Юлташ Ворошилов,
эп час ҫитӗнеп:
пичче пекех сыхлӑп
Совет чиккине.

# Чапаев.

Василий Иванович Чапаев пирӗншӗн ӗмӗр манми ҫын. Вӑл граждан вӑрҫин геройӗ.

1919-мӗш ҫулта пирӗн ҫамрӑк ҫӗршыв ҫине 14 государство ҫарӗ тапӑнчӗ. Буржуази пирӗн ҫӗршывра совет влаҫне пӗтерсе Российӑра каллех хӑйӗн влаҫне туса хурасшӑн пулчӗ. Власть пуҫӗнче вӗсен шучӗпе вырӑс генералӗ Колчак тӑмалла пулнӑ.



Колчак, ют ҫӗршывсенчи буржуази пулӑшнипе, пысӑк ҫар пухса пирӗн ҫине тапӑнчӗ. Колчака хирӗҫ, Фрунзе ертсе пынипе, Хӗрлӗ Ҫар хастарлӑн ҫапӑҫрӗ. Вӑл Колчакӑн ҫарӗсене ҫӗмӗрсе тӑкрӗ. Ҫак ӗҫре Чапаев командир питӗ паллӑ вырӑн йышӑнса тӑчӗ. Чапаев дивизинчен шурӑ ҫарсем вутран хӑранӑ пек хӑранӑ. Колчак Чапаева хирӗҫ темиҫе хутчен те темӗн пысӑкӗш ҫарсем ярса тӑнӑ. Анчах Чапаев вӗсене яланах ҫӗмӗрсе пынӑ.

Чапаев совет влаҫӗшӗн ҫапӑҫса хӑйӗн пуҫне хунӑ. Пӗррехинче ӑна шурӑ ҫарсем тавраллах ҫавӑрса илнӗ. Вара Чапаевӑн Урал шывӗ урлӑ каҫса каймалла пулнӑ. Шыв урлӑ каҫнӑ чухне вӑл, суранланнӑскер, вӑй пӗтсе ҫитнипе шыва путнӑ.

### Паттӑрсен юрри.

Тӑшмана ялан ҫӗнтернӗ,
ҫӗмӗрнӗ Чапай.
Сӑртсем урлӑ, хирсем урлӑ
тухнӑ вӑл чыспа.

Ҫитӗнет совет ҫӗршывӗ,
ҫӗкленет пӗрмай.
Ҫӗн тӗнчешӗн пуҫне хучӗ
командир Чапай.

Хулара халь юрӑ, юрӑ,
юрӑ ялсенче.
Асӑнса юрлатпӑр юрӑ
паттӑрсем ҫинчен.

## Пирӗн чикӗсем хӗрринче пурӑнакан пионерсем.

Пионерка Валя Витушко хӑйӗн юлташӗсемпе пӗрле вӑрманта пӗр палламан хӗрарӑма тӗл пулнӑ:

— Эсир ӑҫта каятӑр?—тесе ыйтнӑ Валя.

Палламан хӗрарӑм чылайччен чӗнмесӗр тӑнӑ та сасартӑк персе янӑ:

— Турра шырама каятӑп, ачасем.

Пионерсем кулса янӑ. Валя вӗсене пуҫне сулса паллӑ панӑ та пурте „турра шыракан“ хӗрарӑма йӗри-тавра ҫавӑрса илнӗ.

— Ăçтисем эсĕ?—тĕпченĕ Валя.

— Кайăр ман патăмран! — кăшкăрса янă хĕрарăм, унтан вăл тарма пуçланă.

Пионерсем ун хыççăн чупнă. Нумайăшĕ часах хĕрарăма хăвалама пăрахнă. Тата каярахпа хĕрарăм хыççăн пĕр Валя кăна чупнă. Валя таракан хĕрарăма пĕр самантлăха та куçран вĕçертмен.

Чикĕри заставăра тревога çапса янă. Пограничниксем юланутпа Валяна пулăшма васкаççĕ. Вĕсене Ира Витушко пĕлтернĕ.

Чикĕ урлă вăрттăн каçнă хĕрарăма чикĕ тĕлĕнче вăл каялла каçса кайиччен тытса ĕлкĕрнĕ. Валя ун умне тухса ун çулне пӳлнĕ. Хĕрарăм ăçталла тарасси çинчен шухăшласа тăнă вăхăтра пограничниксем çитсе те ĕлкĕрнĕ. „Турра шыракан“ хĕрарăм шпионка пулнă.

Пирĕн чикĕсем хĕрринче пурăнакан пионерсем питĕ лайăх ĕçлеççĕ, вĕсем питĕ паха йĕрлевçĕсем. Тĕрлĕ сас-чĕвĕ, турат çатăртатни тăрăх, йĕр тăрăх вĕсем вăрманта кам çӳренине тĕплĕ пĕлеççĕ. Вĕсем хăравçăсем мар. Вĕсем Совет çĕршывĕн чиккисене сыхлас ĕçре хăйсен пурăнăçне те шеллемеççĕ.

**Ыйтусем:**

Пионерсем вăрманта кама тĕл пулнă?
„Турра шыракан“ хĕрарăм чăннипе кам пулнă?



## Чкалова асанса.

Хумханчĕ, хускалчĕ халăх,
хурлăх кашнин чĕринче:
пиртен уйăрлать Чкалов
декабрĕн хĕл сиввинче.

Мĕн-ши паян эп калăп?
Сĕм хуйхă ăшне эп путап.
Çук пирĕнпе тек Чкалов—
вĕçевçĕ, герой, депутат.

Сан пек пулмашкăн, Чкалов,
тупа тăватпăр паян.
Манмĕ сана пирĕн халăх,
асăнĕ ĕмĕр, ялан.

Манмĕ сана пирĕн халăх,—
сўнмеççĕ хĕвеллĕ ятсем.
Малалла эпир утăпăр, Чкалов,
сан ятна та ялав пек йăтса.

# Самолёт ҫинче урапиҫене ҫӳлелле тӑратса.

Пирӗн ҫӗршывӑн чаплӑ лётчикӗ Владимир Коккинаки хӑвӑрт вӗҫекен ҫӗнӗ самолёта тӗпчесе сӑнанӑ. Питӗ ҫӳлте вӗҫнӗ чух самолёт сасартӑк урапиҫемпе ҫӳлелле ҫавӑрӑнса кайнӑ. Унтан вӑл пӗтӗрӗнсе вӗҫме пуҫланӑ. Чӗнпе пушӑ ҫеҫ ҫыхӑннӑ лётчик ҫурри таран кабинӑран тухса самолёт айӗнче пуҫхӗрлӗ ҫакӑннӑ. Машина рульне алӑран вӗҫертнӗ. Чӗн пиҫиххисем хальхаль татӑлас пек туртӑннӑ... Хӑлхасенче калама ҫук хаяр ҫил шӑхӑрнӑ. Ҫӗрпе пӗлӗт тата самолёт та куҫ умӗнчех карусель ҫинчи пек ҫавӑрӑнма пуҫланӑ. Пӗр секунда йӑнӑшсан та пӗтме пулать.



Анчах Коккинаки хӑйӗн вӑйне тата пӗлӗвне шаннӑ. Вӑл, пӗтӗм вӑйне пухса, управлени ручки патне туртӑннӑ. Пуҫхӗрлӗ тӑрса, вӑл самолёта пӗтӗрӗнсе вӗҫмешкӗн чарнӑ. Нумай вӑхӑт иртмен, хурҫӑ кайӑк аэродром ҫине аванах анса ларнӑ.

Коккинаки Совет Союзӗн Геройӗ. Мускавран Ҫурҫӗр Америкӑна ниҫта анса лармасӑр геройла вӗҫсе тухнӑшӑн Совет правительстви ӑна Ленин орденӗ панӑ.




# Октябрятсем.

Октябрятсем коммунистла ушкăнра тăраççĕ. Октябрятсен ушкăнĕ Ленин ятне йышăннă.

Октябрятсем пионерсене, комсомолецсене пулăшса тăраççĕ. Вĕсем сывлăхлă, çирĕп пионер пулма тăрăшаççĕ. Вĕсем çитĕнсен коммунист пулма хатĕрленеççĕ. Вĕсем вырăс, тутар, мари, китай, испани ачисен юлташĕсем. Октябрятсем ытти пур ĕçхалăхсен ачисене те юлташсем пулаççĕ.

Октябрятсем вĕреннĕ çĕрте те, ĕçре те примерлă ачасем. Пĕрне пĕри вĕреннĕ çĕрте те, ытти ĕçре те пулăшаççĕ. Пĕрпĕринпе килĕштерсе пурăнаççĕ. Кашни октябрĕнок çăлтăр çакса çÿрет.

---

Октябрятсен ушкăнĕ кам ячĕпе тăрать?

Октябрятсем камсене пулăшаççĕ?

Октябрятсем кам пулма хатĕрленеççĕ?

## Ачасене чӗнсе юрланӑ юрӑ.

Ачасем сывах-и? Эп хавас!
Ха, пыл хурчӗ пек сӗрлеҫ вӗсем...
Ват Джамбул, кив тӑмрине илсе,
килчӗ сирӗн хӳхӗм уява,
сирӗнпе хӑналанас тесе.

Ватӑ эп, курпун тӗве пек, ачамсем,
выльӑр, кулӑр, кӑмӑллать старик сире.
Эсир, манӑн савнӑ ывӑлӑмсем,
чӗчӗ ӗмекен путексемпе пӗрех.

Сирӗншӗн тӗнче хавас, хитре.
Йӑлкӑшса ҫунаҫҫӗ тӳпере
сирӗншӗн ахах пек ҫӑлтӑрсем,
сар хӗвел савса лӑпкать сире,
пурнӑҫ сирӗн юрӑ пек хитре!

Сталин—ҫӗр ҫинчи чи пысӑк ҫын—
тӑванран та ҫывӑх вӑл сире;
Сталин—ҫут хӗвел вӑл, ун ӑшши
пур ҫӗрте те ачашлать сире.

Сталин кӑмӑллӑ пур ҫынсенчен,
вӑл сире ӗҫчен хуласенчен,
савӑнӑҫлӑ пурӑнчӑр тесе,
ярса пачӗ капӑр теттесем,
букварьсем, хитре кӗнекесем.

# Пирĕн колхоз.

Пирĕн колхоз—пысăк та пуян. Унăн электростанци, виçĕ арман, пысăк мунча, клуб пур.

Çĕре лайăх ĕçлесе тăнипе, пирĕн колхозăн тырри те, тĕрлĕ çимĕçсем те çулсеренех лайăх пулаççĕ.

Выльăх апачĕ тулăх пирки, колхозăн лашисем, тĕрлĕ выльăхĕсем мăнтăр, тутă çӳреççĕ.




Колхозниксен пурăнăçĕ çулсеренех лайăхланса пырать.

Пирĕн колхозра кашни киле икшер хаçат тивет, журналсем те нумай килеççĕ. Килсеренех радио кӳртнĕ. Çамрăксем тĕрлĕ шкулсенче, курссенче вĕренеççĕ. Ваттисем хушшинче те хут пĕлменни çук.

Колхозăн пĕчĕк ачасем валли яслĕ, пысăкраххисем валли ача сачĕ пур. Ĕç çинче колхозниксем пĕрле апатланаççĕ.

Пирĕн аннесен ĕçĕ çăмăлланать. Вĕсен колхозри ĕçсене тума вăхăт нумай юлать.

Колхозниксен пурлăхĕ ӳссе пынипе, вĕсем государствăна та пысăк пулăшу параççĕ. Тырă, тĕрлĕ çимĕç, аш-какай сутаççĕ.

*Колхозра эпир*
*ĕçлетпĕр*
*пĕтĕм ялĕпе.*
*Утăмлатпăр,*
*çĕнтеретпĕр*
*Ленин - Сталин*
*çулĕпе.*

## Лаша ĕçĕ.

Лаша—питĕ усăллă выльăх. Унăн кĕлетки илемлĕ, вăйĕ пысăк. Лаша пит нумай ĕçлет. Ялхуçалăхĕнче лаша темĕн тĕрлĕ ĕçсем туса тăрать.

Хĕлле лашасем вăрмантан тĕрлĕ йывăç, вутшанкă турттараççĕ. Çуркунне лашасене плуг кӳлсе ака тăватпăр. Вĕсене сӳре сĕтĕрттеретпĕр.



Ҫуллахи шӑрӑх вӑхӑтра утӑ ҫулса пуҫтаратпӑр. Симӗс утӑ лавӗсене турттарма каллех пире лашасем кирлӗ.

Кӗр енне эпир лашасем кӳлсе кӗлте турттаратпӑр. Авӑн ҫапсан, хулана тырӑ сутма та лашапах каятпӑр.

Ҫапла лашасем нумай ӗҫлеҫҫӗ. Ҫавӑнпа та эпир лашасене юрататпӑр. Лайӑх ҫитеретпӗр. Хӗлле ӑшӑ витесенче усратпӑр.

## Мӗн вӑл?

*Ҫуркунне плугра, сӳре-ре, ҫулла урапара, хӗлле ҫунапара*

# Лаша мĕн ĕçлет.









Çак картинăсем çине пăхса, лаша мĕн ĕçленине каласа парăр. Колхозсенче çакăнта кăтартнă ĕçсенчен хăшне трактор, хăшне грузовик туса тăрать?

## Лашана лайăх пăх.

Ванюксем колхоза кĕриччен чухăн пурăнатчĕç. Вĕсен пĕр пĕчĕк лаша пурччĕ. Тырри сахал пирки, Ванюксен ашшĕ лашана улăм анчах çитеретчĕ. Сайра хутра çеç утă паркалатчĕ. Ăшă вите çук пирки, Ванюксен лаши хĕлле шăнса тăратчĕ.

Çавăнпа та Ванюксен лаши вăйсăрччĕ.

Çул çине кÿлсе тухсан, пушăпа çапсан та чупмастчĕ. Вăрмана кайсан та, йывăр лава туртаймастчĕ.

Ванюксем колхоза кĕчĕç те, вĕсен пурă-нăçĕ юсансах кайрĕ. Лашин те пурăнăçĕ юсанчĕ.

Ванюксен лаши халĕ колхозăн ăшă, çутă витинче тăрать. Лашасене унта утă, сĕлĕ çитерессĕ, пăтратса параççĕ. Кашни кун хырчăкпа, щёткăпа тасатаççĕ. Чĕрни-сене тикĕслесе тăраççĕ. Лашасем мăнтăр, таса. Çутăлса кăна тăраççĕ. Çул çине тух-сан, пушă кирлĕ мар. Тилхепене хытăрах тытса пыр кăна.

---

Тупмалли юмах: Малта иккĕн чупаççĕ, кайра иккĕн хăвалаççĕ, хыççăн мелке сĕтĕрĕнет.

## Ĕне.

Акă пирĕн ĕне. Вăл пире сĕт парать. Анне ăна кунне виççĕ сăвать. Кашни кун 12 литр сĕт суса илет.

Пирĕн анне сĕтрен хăйма пуçтарать. Хăймине уçласа, усламçу тăвать. Сĕтренех тата тăпăрч пулать. Тăпăрчран эпир чăкăт тăватпăр.

Ĕне сĕт нумайтарах патăр тесе, эпир ăна лайăх пăхатпăр. Тĕрлĕрен апат çитеретпĕр. Утă паратпăр. Улăм тураса пăт-ратса, çăнăх сапса паратпăр. Вырьăх кăш-манĕ те, çĕрулми те, силос та паратпăр.

Ĕне, хĕлле сивĕре шăнса тăрсан, сĕт



сахал парать. Эпир ӑна хӗлле ӑшӑ витере усратпӑр.

Пирӗн колхозра та ӗнесем нумай. Вӗсем валли пысӑк ӑшӑ вите тунӑ. Вӗсене ятарласа уйӑрнӑ хӗрарӑмсем пӑхаҫҫӗ. Вӑхӑтра ҫитереҫҫӗ, вӑхӑтра шӑвараҫҫӗ. Часчасах колхоз витисене выльӑх тухтӑрӗ пырса пӑхать.

Колхоз ӗнисем сӗт нумай параҫҫӗ. Пирӗн колхоз ферминче сӗт хӑймине сепараторпа уйӑрса илсе уйрӑм машинӑсемпе уҫласа ҫу тӑваҫҫӗ.

---

Ӗне пире мӗн парать? Эпир ӑна мӗн ҫитеретпӗр? Мӗншӗн хӗлле ӗнене ӑшӑ витере усрамалла?

## Сыснасем.

Колхозӑн аслӑ выльӑх картишӗнче мӑнтӑр сыснасем ҫӳреҫҫӗ. Нӑр-к! нӑр-к! туса аран уткалаҫҫӗ.

Хӗллехи сивӗсем сыснасене хӑрушӑ мар. Тирӗ айӗнче вӗсен ҫу нумай. Ҫав ҫу

вĕсене сивĕрен сыхласа тăрать. Вăл ăшă кĕрĕк пекех, сивве ямасть.



Пирĕн килте те сыснасем пур. Вĕсене çĕрулми, яшка юлашкисем, çăкăр таткисем, çăнăх шывĕ паратпăр. Çуллахи кунсенче çуса тасатса тăратпăр.

Сысна пире аш, çу, тир, шăрт парать. Вăл питĕ усăллă выльăх.

## Пĕл: мĕн вăл?

Шăши тытать.—Мĕн вăл?
Сĕт парать.—Мĕн вăл?
Çăм парать.—Мĕн вăл?
Кил сыхлать.—Мĕн вăл?
Аш, çу, тир, шăрт парать.—Мĕн вăл?

## Автан.

Çатан çинче шур автан
çунат çапса авăтать:
Куккуреккук! Куккуреккук!
Лисук ăна мăшкăлать,



мăйне тăсса кăшкăрать:
Куккуреккук! Куккуреккук!
Сарайĕнче сар чăххи
сар çăмарта тăвасшăн:
Кăт-кăт-кăт-ктак! Кăт-кăт-кăт-ктак!
Автан ăна илтрĕ те
ыр кăмăллă пуласшăн:
Кăт-кăт-кăт-ктак! Кăт-кăт-кăт-ктак!

Чăххи ларчĕ йăвана,
автан уншăн савăнать.
Куккуреккук! Куккуреккук!

## Кролик.

Пирĕн колхозра кроликсем пур. Вĕсене клеткăсенче усраççĕ. Хăш чухне уçăлса çӳреме килкартине кăлараççĕ.

Кроликсем курăк çиеççĕ, утă çиеççĕ, нимрен ытла купăстапа кишĕре юратаççĕ. Çĕрулмине те çиеççĕ. Анчах вĕсене çĕрулмине çуса памалла, унсăрăн вĕсен хырăмĕнче хуртсем ĕрчесе кайма пултараççĕ.



Пирĕн колхозри кроликсем пиртен хăрамаççĕ. Эпир вĕсене апат паратпăр. Çурăмĕсенчен ачашласа та пăхатпăр. Вĕсен çăмĕ мамăк пек çемçе. Хăшĕ шурă тĕслĕ, хăшĕ хура, хăмăррисем те пур.

Кролик ашĕ питĕ тутлă.

## Кушакпа йытă.

Кушак апат çисе тăнă. Çав вăхăтра ун патне йытă çури пынă. Кушак йытă çурине хăйĕн çивĕч чĕрнисемпе сăмсаран чăрмаласа илнĕ.

Йытă çури те парăнасшăн пулман. Вăл кушака хӳринчен çыртнă. Кушак йытта хирĕç шăртланса тăнă. Вăл ăна куçĕнчен чавса илме хăтланнă. Йытти кушака ĕнсерен çыртса илесшĕн пулнă.

Çав вăхăтра Анюк инке шыв йăтса пынă. Вăл кушакпа йытă çапăçнине кур-



нă та вĕсене чарма пикеннĕ. Лешсем чарăнман. Вара Анюк инке тулли витрине тытнă та кушакпа йытă çине чашт! сапнă. Кушакпа йытă тин пĕр-пĕринчен уйрăлса тарнă.

## Мĕн вăл?

Кашкăрпа пĕр тăванскер, хуçапала туслăскер, çĕрле ыйхă пĕлменскер крыльца айĕнче выртать, кил хуçин çуртне сыхлать.

*Шăшишĕн кушак та тискер кайăк.*

# Ак япала!

Акӑ вӑл, акӑ!





Халех тытатӑп!

Куна эпӗ кӗтменччӗ!



## Кашкӑр.

Вӑрманта та, хирте те пур чӗрчун сивӗрен пытаннӑ. Шӑна-пӑван тахçанах пӗтнӗ. Çӗлен-калта тӑпра ӑшӗнче хытса выртнӑ. Упа хӗл каçма мӑн шӑтӑка кӗрсе выртнӑ. Арлансем те хӑйсен шӑтӑкӗсенче çывӑраççӗ.

Кашкӑр анчах çывӑрмасть. Вӑл, ниçта кайса кӗреймесӗр, унта-кунта чупкалать. Хырӑмӗ выçнипе кунӗн-çӗрӗн апат çинчен шухӑшлать. Çӗрле яла пырса выльӑхсене тапӑнать.



Ял çыннисем кашкăртан сыхланаççĕ. Выльăх-чĕрлĕхсене шанчăклă çĕре, ăшă витесене хупаççĕ.

## Мĕн вăл?

Кăвак тĕслĕ, çивĕч шăллă, сĕм вăрманта пурăнать, пăру-путек тавражне май килсессĕн вăл пăвать.

## Упа.

Кĕркунне упа вăрман чăтлăхне чи шала кĕрсе кайрĕ. Унта вăл пĕр чăрăш айне шăтăк чаврĕ. Шăтăк тĕпне вĕтĕ туратсем сарчĕ. Çиеле çапă витрĕ. Унтан шăтăка кĕрсе выртрĕ.

Хĕл çитрĕ. Пĕтĕм вăрмана юр витсе хучĕ. Çил-тăмансем улама тытăнчĕç. Упа



шăтăкне те юр витсе лартрĕ. Анчах упа тĕлĕрсе çеç выртать, шăтăкра ăна ăшă.

Çуркунне çитрĕ. Хĕвел ăшăтса пăхма пуçларĕ. Юр ирĕлме тытăнчĕ. Упа çуркуннене туйса илчĕ те шăтăкран йăраланса тухрĕ. Вăрман тăрăх апат шырама утрĕ.

---

Упа ăçта хĕл каçать? Çĕлен-калта хĕлле ăçта пытанса выртать?

**Кам кама тытнă?**

*– Упа тытрăм!*
*– Çавăтса кил эппин*
*– Пымасть вăл!*
*– Эппин ху кил.*
*– Хама та ямасть.*

# Пакша.

Юр ӳкрӗ. Эпир пиччепе вӑрмана кайӑк тытма кайрӑмӑр. Унталла-кунталла пӑхкаласа, йӗр йӗрлесе пыратпӑр. Акӑ пӗр юман патӗнче мӑйӑрпа йӗкел хуппи сапаланса выртать.



Пичче мана шӑппӑн: „Ан шарлӑ, кунта пакша йӑви пур. Ав куратӑн-и?“—тет.

Чӑнах та, турат ҫинче пакша ларать. Эпӗ пӑхса та юлаймарӑм,—пакша, туратран турата сиккелесе, куҫран та ҫухалчӗ. Ҫавӑнтах пичче хӑвӑл юман шыраса тупрӗ. Вӑл юман тӑрне хӑпарса кайрӗ те:

— Эй, мӑнтарӑн пакши, мӗн-мӗн кӑна хатӗрлемен! Ӑслӑ мӗн, хӗл каҫиччен выҫӑ аптрас ҫук,—терӗ.

Чӑнах та, хӑвӑл тӗпӗнче тирпейлесе хунӑ сап-сарӑ мӑйӑрӗ те, йӗкелӗ те, типнӗ ҫырли те пур. Пичче пӗр мӑйӑрне катса пӑхрӗ.

Пакша мӑйӑрне эпӗ те тутанса пӑхрӑм.

---

Пакша йӑвине ӑҫта тӑвать? Хӗлле вӑл мӗн ҫисе пурӑнать?

# Кайăксене ан тытăр.

Пĕрре хĕлле эпир шăллăмпа икĕ кăсăя тытрăмăр. Пӳрте илсе кĕтĕмĕр. Ҫитерес тесе кантăр вăрри те паратпăр, çăкăр та паратпăр. Кăсăясем сăхса та пăхмаççĕ. Чĕтресе анчах лараççĕ.



Тепĕр кунне, эпĕ шкултан таврăннă çĕре, ман шăллăм макăрса ларать.

— Мĕн пулчĕ тата?— тесе ыйтрăм.

— Кă-сă-я-сем пĕ-ĕт-рĕç! — тесе тата хытăрах уласа ячĕ шăллăм.

— Епле пĕтрĕç?—тетĕп.

— Пĕри çунакан кăмакана вĕçсе кĕрсе вилнĕ, теприне кушак тытса çинĕ,—тет шăллăм.

Кăмăла пит лайăх мар пулса кайрĕ. „Ман айăппах пĕтрĕç-çке кусем“, — тесе шухăшлама пуçларăм. Вĕçен кайăксем пире мĕн чухлĕ усă пани çинчен шкулта вĕрентнисем аса килчĕç. „Ӳлĕм нихçан та усăллă кайăксене çапла тытса пĕтерессĕм çук“,—тесе хама хам сăмах патăм.

# Пĕрре суйсан, тепринче ĕненмеççĕ.

Пĕр ача сурăх кĕтĕвĕ кĕтнĕ. Вăл, кашкăр курнă пек туса, юри: Пулăшăр! Кашкăр!.. Кашкăр!..—тесе кăшкăрнă.

Хресченсем чупса пынă, анчах нимĕнле кашкăр та пулман.

Ача çапла ик-виç хутчен те тунă. Пĕрре çав ача кĕтÿ пăхнă çĕре чăнах та кашкăр пынă. Ача кăшкăрма тытăннă: — Кунта, кунта часрах! Кашкăр!..—тенĕ.

Хресченсем, ку ача каллех улталать пулĕ тесе, ача патне пыман. Кашкăр пăхать—никамран хăрамалли те çук. Вăл ирĕккĕнех чылай сурăха пăва-пăва тухнă.

| Суйни—сиенлĕ. Пионер, шкул ачи, нихçан та ан суй, тÿррине кала. |
|---|

## Вĕреннĕ шăнкăрч.

Пĕр ватă кайăкçăн вĕреннĕ шăнкăрч пулнă. Вăл калаçма пĕлнĕ. Старикĕ:

— Ăçта эсĕ, шăнкăрчăм?—тесе ыйтсан, шăнкăрчи çавăнтах:

— Кунта, асатте!—тесе чĕннĕ.

Старик патне унăн тĕлĕнмелле шăнкăрчине итлеме кÿршĕ ывăлĕ çÿренĕ. Пĕрре старик килĕнчен тем ĕçпе тухса кайнă пулнă. Çав хушăра хай кÿршĕ ачи пырса кĕнĕ. Вăл çак паха шăнкăрча вăрласа кайма шут тытнă. Шăнкăрча тытнă та хăй кĕсъине чиксе хунă.

Çав вăхăтра старик пырса кĕнĕ.

— Ăçта эсĕ, шăнкăрчăм?—тесе ыйтнă вăл.

— Кунта, асатте!—кăшкăрса янă шăнкăрч вăрă кĕсъинчен.

## Тухтăр патĕнче.

Петясен йытă пур. Петя унпа питĕ туслă. Вĕсем иккĕш выляççĕ. Хăш чухне йытти Петяна тутинчен те çуласа илет.

Пĕрре Петя чирлерĕ. Амăшĕ ăна тухтăр патне илсе кайрĕ. Йытти те юлмарĕ, вĕсен хыççăнах пычĕ.

Тухтăр Петяна пăхрĕ те:

— Сан хырăмăнта шĕвĕрĕлченсем пур,— терĕ. Çав вăхăтрах тухтăр пӳлĕмне Петя йытти чупса кĕчĕ. Тухтăр ăна курчĕ те:

— Сана йытту пит юрататать пулмалла?— тесе ыйтрĕ Петяран.

— Юратмасăр, эпир унпа иксĕмĕр пĕрле вылятпăр, пĕр-пĕрне чуптăватпăр,— терĕ Петя.

Кăна илтсен тухтăр çапла каларĕ:

— Эсир пĕр-пĕрне юратни лайăх. Анчах йытта нихçан та хăвна çулама ан пар. Çав шĕвĕрĕлченсене сана йытту ертнĕ. Йытă-кушак таврашне чуптума юрамасть,—терĕ.

---

Петяна шĕвĕрĕлченсем мĕнрен ернĕ? Тухтăр Петяна мĕн каланă?

*Йытă-кушак таврашне ан чупту, питне-куçна ан çулаттар.*

# Таса пурăнма вěрен.

Эпě ирхине 7 сехетре ыйхăран вăранатăп. Вăрансан, вырăн çинче кахалланса выртмастăп. Тӳрех тăрса гимнастика тăватăп та тумланма пуçлатăп. Вырăна пуххса тирпейлетěп. Шăла-çăвара тасататăп, пите-куçа çăватăп. Шурă алшăллипе шăлăнатăп.

Эпě эрнере пěрре мунча кěретěп. Кěпе-йěме улăштаратăп.

Чěрнесене кăшламастăп, хачăпала касатăп. Çи-пуçа та вараламастăп, яланах таса çӳретěп. Манăн алăсем те таса, вěсене ěç хыççăнах çăватăп. Алла çумасăр апат çиме лармастăп.

Урайне сурмастăп. Пӳртре тусан кăлармастăп, çӳпěлеместěп. Пӳртри сывлăша час-часах уçăлтаратăп.

Эсě те ман пек пул, таса пурăнма тăрăш.

---

Эсир ирхине миçе сехетре тăратăр? Кашни ирех шăлсене тасататăр-и? Сирěн уйрăм алшăлли пур-и?

## Мěнле çывăрмалла.

1. 9 сехетре çывăрма вырт. 7 сехетре тăр.
2. Çиелти кěпӳ-йěмне хывса çывăр.
3. Пуç çинчен ан витěн.
4. Аллусене ан вит.
5. Виçě кунта пěрре вырăнна тула тухса силле.

Çывăрас умěн те, çывăрса тăнă хыççăн та пӳлěме форточка е алăк уçса уçăлтар.

# Юмӑҫ пӗтерет, тухтӑр пулӑшать.

(Анне каласа пани.)

Пирӗн Ванюка пӗчӗккӗ чухне трахома ернӗччӗ.

Эпӗ ӑна юмӑҫ патне илсе кайрӑм. Юмӑҫ Ванюк куҫне тавӑрса ҫуларӗ. Сурчӑкӗпе сӗрчӗ, сахӑр ватса ячӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн Ванюкӑн куҫӗ пушшех пӑсӑлса кайрӗ.

Пурӑна-киле Ванюк куҫне шур илме пуҫларӗ. Куҫ курми пулнипе, Ванюк шкула та ҫӳрейми пулчӗ.

Ванюк шкула ҫӳреме пӑрахсан, учительпе пионерсем пирӗн пата пычӗҫ. Мана ачана юмӑҫ патне илсе кайнӑшӑн ятларӗҫ. Ванюка тухтӑр патне илсе кайма хушрӗҫ.

Вара эпӗ тепӗр куннех Ванюка больницӑна илсе кайрӑм. Тухтӑр Ванюка больницӑна хӑварчӗ. Пӗр уйӑхран Ванюк больницӑран тавӑрӑнчӗ. Унӑн куҫӗ тӳрленчӗ. Вӑл чиперех куракан пулчӗ. Ҫавӑнтанпа эпӗ юмӑҫ патне ура та ярса пусмастӑп.

---

Трахомӑпа чирлес мар тесен, таса пурӑн. Ирхине, ӗҫ хыҫҫӑн, апат умӗн, апат ҫисен, ҫывӑрма выртиччен—аллуна ҫу. Уйрӑм, таса алшӑллипе шӑлӑн. Куҫна аллупа, кӗпе ҫаннипе ан шӑл. Трахомӑллӑ ҫын вырӑнӗ ҫине ан вырт.

Куҫ пӑсӑлсан, ҫийӗнчех больницӑна кай.

Трахомӑпа чирлесен, больницӑна вӑхӑтра ҫӳре.

Тухтӑр мӗн хушнине туса пыр.

## Сивĕ енче.

Иква ирхине юртан тунă пӳртре вă-ранчĕ. Урай варринче чашкăра тюлень çăвĕ çунса ларать. Ун çути пӳрте çутатать, вăлах ăна ăшăтать те. Иква амăшĕ ун çинче апат пĕçерет.

Иква шур упа тирĕ çинчен сиксе тăчĕ. Тиртен çĕленĕ тумтирне тăхăнса ячĕ. Амăшĕ ăна пиншакне, йĕмне, çĕлĕкне пĕр-ле туса çĕлесе панă.

Йква алăк вырăнне карса хунă тире сирчĕ те шăтăкран упаленсе тула тухрĕ. Тулта сивĕ, тĕттĕм.

Кунта хĕлле хĕвел темиçе уйăх хушши пĕрре те тухмасть. Çулла вара темиçе уйăх хушши пĕрре те анмасть.

Кунта йывăç ӳсмест. Çавăнпа та Иква ашшĕ пӳрте юртан тăвать. Çулла вăл тир-сенчен ӳпле тăвать.

## Пăлан.

Пăлан—сивĕ енче пурăнакан выльăх. Сивĕ енче пирĕн выльăхсем пурăнай-маççĕ. Вĕсем ытла пысăк сивĕсене тӳсей-меççĕ. Пăлан тӳсет. Вăл апатне те хăех тупса çиет. Юра чавса, юр айĕнчи шăн курăка çиет.

Сивĕ енче пурăнакан çынсем пăлан ашне çиеççĕ. Пăлан сĕтне ĕçеççĕ. Пăлан



тирĕнчен тумтир çĕлеççĕ. Çул çине каяс пулсан, пăлан кÿлсе тухаççĕ. Пăлан сивĕ енчи çынсемшĕн питĕ кирлĕ выльăх. Вĕсем пăлансăр пурăнма та пултараймаççĕ.

## Пăрсем хушшинче.

Инçетри çурçĕрте пăрлă тинĕс сарăлса выртать. Çынсем ĕлĕкреннех çак çĕршыва çитсе тĕпчесшĕн пулнă. Унта çитес тесе кайнă çынсенчен нумайăшĕ шăнса вилнĕ. Пăрсем хушшинче темĕн чухлĕ карап пĕтнĕ.

Вара çынсем çак çурçĕрти вырăна сывлăшра вĕçмелли караппа — дирижабльпе çитме шут тытнă. Пысăк дирижабль туса хатĕрленĕ те инçетри çурçĕрелле вĕçсе кайнă. Дирижабль тăвăл айне пулнă.

Дирижабль ҫинчи сынсем радио тăрăх: „Пĕтетпĕр, ҫăлма килĕр“, тесе чĕннĕ.

Ҫав сынсене ҫăлма пирĕн ледокол— „Красин“ тухса кайнă. Темиҫе кунтан вăл пăрлă тинĕсе ҫитнĕ. Унăн умĕнче йĕри-тавра пăр сарăлса выртнă. Малалла кайнăҫемĕн пăр хулăмланса пынă. Ледокола пăра ҫĕмĕрсе пыма йывăрланса пынă.

Ледокол ҫинче аэроплан пулнă. Аэроплан пĕтекен сынсене шырама пăрлă хирсем ҫийĕн вĕҫсе кайнă.

Акă аэроплан ҫинчен аялта сынсем выртни курăннă. Сыннисем чĕрех пулнă. Вĕсене аэроплан ҫинчен ҫимелли антарса панă. Радио тăрăх пĕлтернипе, ҫав сынсем патне карап та ҫитнĕ. Сынсем ҫăлăннă. Вĕсем пăрсем хушшинче 50 кун пурăннă.

## Челюскинецсем.

„Челюскин“ парохода Ҫурҫĕрти Аслă тинĕс ҫулне тĕпчеме янă пулнă. Тĕпчев ĕҫне ертсе пыма Отто Юльевич Шмидт юлташа хушнă.

„Челюскин“ аякри ҫурҫĕрелле малалла та малалла ишсе пыратъ. Вăл малалла пынăҫемĕн тинĕс ҫинчи пăрсем нумайланса пыраҫҫĕ.

Февралĕн 13-мĕш кунĕнче пăрсем парохода пĕтĕмпех хупăрласа ҫитерчĕҫ. Пăрсем хĕстернипе пароходăн сулахай аякки

шăтса кайрĕ. Пароход ăшне шыв кĕрсе тулчĕ. Пароход путма тытăнчĕ. Вара пароход капитанĕ Воронин çынсене пăр çине тухма хушрĕ.


О. Ю. Шмидт.

Пароход путрĕ. Анчах çынсем пĕр хăрамасăр путакан пароход çинчен кирлĕ япаласене кăларма ĕлкĕрчĕç. Вара пысăк пăр çинче, юрсем хушшинче палаткăсем карса пурăнма тытăнчĕç. Хĕрарăмсемпе ачасем валли пароход çĕмрĕкĕсенчен барак турĕç. Пароход путни çинчен пĕтĕм çĕршыва радио тăрăх пĕлтерчĕç.

Чăтма çук сивĕ. Анчах челюскинецсем, сивĕрен хăрамасăрах, аэроплансене лармашкăн пăрсене касса тикĕс вырăн тума тытăнчĕç. Пăрсене тикĕслерĕç. Унтан çӳллĕ вышка туса хучĕç. Вышка çине хĕрлĕ ялав çакрĕç.

Радио тăрăх хуйхăллă хыпара илтсенех, Совет правительстви пăрсем хушшинче пысăк хăрушлăхра пурăнакан паттăрсене çăлма аэроплансем ячĕ. Пирĕн çĕршывăн паллă лётчикĕсем челюскинецсене хăрушлăхран хăтарма васкаса вĕçсе кайрĕç. Вĕ-

сене вĕçме çил-тăмансем, тĕтресем, хаяр сивĕсем чăрмантарнă. Вĕсен аэропланĕсем пăрлана-пăрлана ларнă. Çапах та вĕсем малалла та малалла вĕçсе пынă.

Март уйăхĕн 5-мĕш кунĕнче никамран малтан челюскинецсен лагерьне Ляпидевский лётчик вĕçсе çитнĕ. Вăл пăр çинчен малтан хĕрарăмсемпе ачасене лартса илсе кайнă.



Унтан ытти лётчиксем те вĕçсе çитсе пăр çинчи çынсене иле-иле кайнă. Апрелĕн 13-мĕш кунĕнче пăр çинчен юлашки ултă çынна лартса илсе тухнă. Челюскинецсене пирĕн паттăр лётчиксем коммунистсен партийĕ тата пирĕн юратнă çулпуç Сталин юлташ пулăшнипе çăлма пултарчĕç. Совет правительстви челюскинецсене çăлнă çичĕ лётчика Совет Союзĕн Геройĕ ятне пачĕ. Челюскинецсене хăтарнишĕн пирĕн мĕнпур çĕршыв хаваслансчĕ. Совет лётчикĕсен паттăрлăхĕнчен пĕтĕм тĕнче тĕлĕнчĕ.

# Тăхăр уйăх пăр çинче.

1937-мĕш çулта, май уйăхĕнче, пирĕн совет çĕршывĕн çыннисем аэропланпа Çурçĕр полюсне çитсе ларнă. Унччен Çурçĕр полюсĕнче никам та пурăнса курман. Тăвату хастарлă çын: Папанин, Кренкель, Ширшов тата Федоров Çурçĕр полюсĕ çинче хĕл каçнă. Хăйсене пурăнмашкăн вĕсем куçса çӳрекен пăр çине палаткăсем туса лартнă. Çилпе ĕçлекен электростанци лартнă.



Папанин Ширшов Кренкель Федоров

Çак хастарлă çынсем Çурçĕр полюсне сăнаса пурăннă. Халиччен Çурçĕр полюсĕ çинчен никам та тĕплĕн пĕлмен. Унта тӳсме çук сивĕ, унта чĕрĕ чунсем те çук пулĕ тесе шутланă. Полюс çине юлнă çынсем сăнанă тăрăх Çурçĕр полюсĕнче те пурăнăç чухăн мар. Унта вĕçен кайăксем, тĕрлĕ чĕрчунсем пур.

Папанин, Кренкель, Ширшов тата Федоров хăйсем мĕн сăнанисене радио тăрăх пĕлтерсе тăнă. Вĕсем пăр çинче пурăннă. Вĕсен пăрĕ пĕрмаях шуса пынă. 1938-мĕш çулта февралĕн 1-мĕшĕнче вĕсен пăрĕ çуркаланса пĕтнĕ. Пăр татăкĕн тăршшĕ 300 метр, сарлакăшĕ 200 метр анчах юлнă. Унтан çав пăр катăкĕ тата çурăлса пĕчĕкленсе юлнă.

Совет правительстви çак нимрен хăраман тăвата çынна пăр çинчен илмешкĕн ледоколсем тата аэроплансем ячĕ. Февралĕн 19-мĕшĕнче Папанин, Кренкель, Ширшов тата Федоров вĕсене илме пынă пароходсем çине ларнă.

Пăр татăкĕ çинче 9 уйăх хушши пурăнса нумай усăллă сăнавсем тунăшăн Совет правительстви çак чаплă çынсене Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă. Вĕсене Ленин орденĕ парса наградăланă.

## „Седов“ ледокол.

1937-мĕш çулта „Седов“ ледокол Çурçĕрти Аслă тинĕс çулĕпе ишсе пынă. Чылай вăхăт иртнĕ. Хĕл ларнă. Çул çинче пăрсем йышлăлансах пынă. Талккишпех сарăлса выртакан пăр ледокола хĕссе пынă. Пăрсем хĕстернипе ледоколăн рулĕ çĕмĕрĕлнĕ. Ледоколăн пăрсем хушшинче хĕл каçма чарăнса тăмалла пулнă. 1937-мĕш çулхи октябрĕн 23-мĕшĕнче ледокол пăрсем хушшинче хĕл каçма чарăннă.

Океанри пăрсем ледокола хĕстерсе илсе хăйсем куçнă май ăна та шутарса пынă. Çапла майпа ледокол пăрсем хушшинче икĕ çул та виçĕ уйăха яхăн куçса пынă. Вăл Çурçĕрти пăрлă океан тăршшипе шуса тухнă.

Ледокол çинчи çынсем ку вăхăтра наука тĕпчевĕсем, сăнавĕсем туса пынă. Хастарлă 15 çын, хăйсен пурнăçне хĕрхенмесĕр, совет наукине малалла ярассишĕн вăй хурса ĕçленĕ.

1940-мĕш çулхи январь уйăхĕнче „Иосиф Сталин“ ледокол „Седова“ пăрсем хушшинчен кăларнă. Хастарлă 15 çынна Совет Союзĕнчи ĕççыннисем пысăк хавaспа кĕтсе илнĕ.

Совет правительстви ледокол капитанне Бадигин юлташа тата унпа пĕрле пулнă хастарлă 14 çынна Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă, Ленин орденĕ тата „Ылттăн çăлтăр“ медалĕ парса наградăланă.

## Тăван çĕршыв.

Çĕршывра, куратпăр халĕ,
питĕ паттăр ўсĕмпе
çитĕнет хули те ялĕ
аслă Ленин çулĕпе.

Çитĕнет тăван çĕршывăм.
Хĕвел пек ăшшăн савса,
ўстерет ăна çулпуçĕ—
Сталин, аслă вăй хурса.

Вĕçĕмсĕр ăна саватпăр,
хĕвел евĕр аттене.
Вĕренсе ўссе пыратпăр,
пирте савăнăç, телей.

Вăл пире хаваслăх пачĕ,
Ленин пек пулма вĕрентрĕ.
Конституци туса пачĕ,
кунçула хаваслăх кўртрĕ.

## Ăшă енче.

Пирĕн патран кăнтăр еннелле питĕ инçе кайсан, ялан ăшă тăракан çĕршывсене тĕл пулатпăр. Ку çĕршывсенче нихăçан та хĕл пулмасть, юр çумасть. Хĕвел питĕ çўле хăпарать, кăнтăрлара вăл шăп пуç тўпи тĕлĕнче пулать.

Ăшă енче тĕрлĕ йывăç-курăксем йышлăн ўсеççĕ. Унта арăслан, слон, тигр тата ытти тискер кайăксемпе вĕçен кайăксем пурăнаççĕ. Кунти пекех унта çынсем те пурăнаççĕ.

Пирĕн патăрти вĕçен кайăксем кĕркунне çавăнта каяççĕ.

Ăшă енче хăшпĕр çĕрте çултаăкĕпе те çумăр çуман вырăнсем пур. Унта вара нимĕн те ўсмест. Унта пушă хир. Пĕр хăйăр анчах сарăлса выртать.



## Слонпа унӑн ҫури.

Кайӑкҫӑсем слон амине тытас тесе хӑвалана. Слон ами хӑйӗн ҫурипе пӗрле тарса хӑтӑлма тӑрӑшнӑ.

Кайӑкҫӑсем слон амине тарӑн шыв хӗрринелле хӑваласа пынӑ. Шыв хӗрне ҫитсен, слон ами хӑйӗн ҫурине сӑмси вӗҫӗпе ҫавӑрса хӗстернӗ те ишме тытӑннӑ. Слон ҫури шывран хӑранӑ, вӑл ишме пӗлмен. Амӑшӗ ӑна шыв ҫийӗн ҫӳлте тытса пынӑ.

Кайӑкҫӑсем слон ами хӑйӗн ҫурине мӗнле хӗрхеннине курнӑ та ӑна хӑвалама чарӑннӑ.



## Ҫуркунне пулать.

Йӑл-йӑл пӑхать сар хӗвел:
кунран кунах ӑшӑтать.
Сисмесӗрех сивӗ хӗл
ҫур ӑшшине парӑнать.

Пур ҫӗрте те шурӑ юр
хӗвелпеле пусӑрнать.
Пӗчӗккӗнех ҫуна ҫуль
навусланать, хуралать.

Ял хӗрринчи Митраппан
сарай ҫинчен юр тӑкать.
Пӗчӗк ача—Сар Иван—
шӑхлич калать, савӑнать.

# *Çуркунне килет. Вĕçен кайăксене кĕтсе илер.*

**Сăнаса пырăр.** Юр хĕллехи пекех-и? Çурт хĕррисенче тумла пăрĕсем пур-и? Йывăç папаккисем сарăлаççĕ-и? Мĕнле кайăк хăçан килет? Кун кĕскелчĕ-и, вăрăмланчĕ-и? Выльăх-чĕрлĕхсен çăмĕсем мĕнле улшăнаççĕ? Колхозра мĕнле ĕçе хатĕрленеççĕ?

---

Çуркуннехи пурăнăçа сăнама тетрадь тăвăр та кашни кунхи сăнавсене çырса пырăр.

## Тавлашу.

Петяпа Хветке ĕнер тавлашса илчĕç. Хветки:—Çуркунне енне кайсан çĕр кĕскелет,—тет.

Петти:—Çук апла мар, çуркунне кун вăрăмланать,—тет.

Хветке:—Тĕрĕс мар, çуркунне çĕр кĕскерех,—тесе. кăшкăрать. Петя ăна хирĕç тарăхса кăшкăрать:—Суян. Çуркунне кун вăрăмрах,—тет.

— Эсĕ ху суян,—тет Хветки.

Хайхисем хĕрсе кайса хытăран хытă кăшкăрма пуçларĕç. Нихăшĕ те пĕр-пĕрне кăшкăрса çĕнтерейместĕç. Юлашкинчен, аптранипе, учитель патне пычĕç. Учителе

каласа панӑ чух каллех тавлашма пуҫларӗҫ. Учитель кӑшт итлесе тӑчӗ те кӑмӑллӑ сасӑпа:

— Ан кӑшкӑрӑр. Хӑвӑр мӗн каланине шухӑшласа илӗр-ха,—терӗ. Ачасем шухӑшласа пӑхрӗҫ те хӑйсенчен хӑйсем кулса ячӗҫ.

Шухӑшласа пӑхӑр-ха: Хветке тӗрӗс каланӑ-и, е Петя-и?

## Тумтир улшӑнать.

Ҫанталӑк ӑшӑтрӗ. Хӗллехи хаяр сивӗсем иртсе кайрӗҫ. Вӗсем халь часах таврӑнас ҫук.

Ӗнтӗ выльӑхсене вӑрӑм ҫӑм кирлӗ мар. Вӗсем хӑйсен хӗллехи ҫӑмне тӑкма пуҫларӗҫ. Тасалса, якалса кайрӗҫ. Мулкач хӗлле шап-шурӑ ҫӳретчӗ, халь тӗксӗмленме тытӑнчӗ. Хӗлле юр ҫинче ҫӳреме ӑна шурӑ тӗс кирлӗ пулнӑ. Ҫуркуннепе ҫу кунӗсенче шурӑ тӗс аякранах палӑрать. Тӗксӗм тӗс мулкача тӗрлӗ тискер кайӑксенчен те, этемрен те сыхлать.

Этеме те текех кӗрӗксем, тӑлӑпсем кирлӗ мар. Ҫӑматӑсене те хывма вӑхӑт ҫитрӗ. Сӑран атӑ е пушмак тӑхӑнмалла. Кӗрӗксене хыватпӑр, сӑкман-пиншак тӑхӑнатпӑр. Ӑшӑ ҫӗлӗк кирлӗ мар. Тавай пире картус пар.



## Тимĕрç.

Чăнкки-чанкки янратса
çырма тăрăх сас каять.
Чăлтăр-чăлтăр хĕмсемпе
тимĕрç лаççи çутăлать.

Тимук, Тимук тимĕрçĕн
пичĕ тăрăх тар юхать.
Хĕрлĕ-кăвак-симĕсĕн
плуг тимĕрри хĕм сапать.

Тимĕр, тимĕр, тимĕрĕм,
хĕр-ха часрах, тимĕрĕм.
Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать,
колхоз хирĕ хуралать.

Чӑнкки-чанкки, чӑнкки-чанкки!
çыпçӑн хурçӑ лайӑхрах.
Çерем çĕтсе тыр аксан,
тырри пултӑр вӑйлӑрах.

## Çуркунне.

Акӑ шавлӑ, ӑшӑ çуркунне персе çитрĕ. Сарӑ хĕвел йӑлтӑртатса кулать. Пӳртре кӑшт та ларас килмест. Шкултан тавӑрӑнсан, каç пуличченех тулта выляса çӳретпĕр. Пӳрте урок вĕренме анчах кĕретпĕр.

Пирĕн колхоз çуракине хатĕр. Плугсене, сӳресене, лаша хатĕрĕсене юсаттарса хунӑ. Суха тума машина-трактор станципе договор тунӑ. Хамӑр колхозран икĕ çын трактористсен курсĕнче вĕренсе килчĕç.

Колхозниксем хушшинче çураки вӑхӑтĕнче камӑн мĕн ĕçлемеллине паллӑ туса хунӑ. Кашниех мĕн ĕçлемеллине пĕлсе тӑрать. Вӑрлӑха суртласа тасатнӑ. Акма пуçличчен формалинпа чӳхесси анчах юлнӑ. Лашасем чылай вӑхӑт лайӑх апат çисе мӑнтӑрланнӑ.

Эпир те колхоза çуракине хатĕрленме пулӑшатпӑр. Вӑрлӑхсене шӑтарса пӑхрӑмӑр. Стена хаçачĕ кӑлартӑмӑр.

Хамӑр шкул умне йывӑçсем лартма, чечексем акма хатĕрленетпĕр.



## Шăнкăрч.

Ӳур кайăкран маларах
килтĕм вĕҫсе васкаса,
ывăннине пĕлмесĕр,
юрла, юрла, савăнса.
Ҫурт тăррине лартăм та
янăратрăм юррăма.
Савăнтартăм, култартăм,
ӑчасене сăввăмпа.
Йăпăрт ҫеҫ хам йăвана
кӗре-кĕре тухатăп.
Ӑшă вырăн тумашкăн
тĕксем, ҫӳҫсем пухатăп.

---

**Тупмалли юмах:** Пуртăсăр, алăсăр хăйне валли ҫурт тăвать.

## Пăр кайни.

Пирĕн ял хĕррипе Ҫавал ятлă шыв юхса выртать. Хĕлле ҫав шыв ҫинче пăр шăнса ларать. Эпир пăр ҫинче конькипе ярăнса савăнатпăр. Ҫуркунне вара кашни кунах ҫырма хĕрне кайса пăхатпăр, пăр каяссине кĕтетпĕр.





Ҫак картинӑсем ҫине пӑхса, ҫакӑнта мӗн пулнине каласа парӑр.

Акă хирсенчен, вăрмансенчен шыв анса çырмари пăра хăпартрĕ. Пăр кайнине курас тесе, кашни кунах кĕтсе тăратпăр. Пĕр ăшă кун, кăнтăрла иртсен, пăр çĕмĕрĕлсе хуллен анаталла шăва пуçларĕ. Каç еннелле пăр тапранса та кайрĕ. Эпир, ачасем, ялĕпех шыв хĕрне пуçтарăнтăмăр.

Пăр татăкĕсем юхса пĕрне пĕри хăвалаççĕ. Шарт! туса катăлаççĕ.

Кĕпер тĕлĕнче пăр капланма пуçларĕ. Ниепле те кĕпер айĕнчен тухса каяймасть. Кĕпер шатăртатма тытăнчĕ. Çав вăхăтра çынсем пакурсемпе, кĕреçесемпе, шалçасемпе чупса çитрĕç. Пăра ката-ката, кĕпер айнелле тĕрткелесе ячĕç. Кĕпере çĕмĕрме памарĕç.

---

Пăр кайнине курни çинчен каласа парăр.

## Сентти.

Чипер ача Сентти пур,
чупса çӳрет урамра.
Кĕвентине утланса
ача вылять лашалла.
Чипер ача Сентти пур,
чупса килет лашипе.
Хăйĕн пĕчĕк чĕлхипе
пакăлтатать инкĕшпе.
Кĕвентине утланса,
инкĕш патне çĕмĕрсе
кĕрсе кайрĕ ахăрса.
Çапать паттăр лашине
хăй аллинчи хуллипе.

# Миша шыв арманĕ туни.

Çуркунне пулчĕ. Урамсем тăрăх шыв шавласа юхать. Ачасем шыв юхнă çĕрте выляççĕ. Вĕсем шыв тăрăх кимĕсем яраççĕ, пĕве пĕвелеççĕ. Миша та ĕçлет. Вăл шыв арманĕ тăвасшăн тăрăшса çӳрет. Амăшĕнчен пушă туплашка илчĕ. Туплашкана тăвата тĕлтен шăтарчĕ. Çав шăтăксене пĕчĕк çеç хăйă таткисем чикрĕ. Туплашка витĕр патак тирсе ăна икĕ пĕчĕк юпа хушшине вырнаçтарса лартрĕ. Мишан шыв арманĕ пулса та тăчĕ.



Шыв юхать, вăл Миша арманне хăвăрт çавăрать. Миша хавасланнă. Вăл юлташĕсене арман çавăрăннине курма чĕнет.

## Çуркунне.

Килчĕ ырă çуркунне,
килчĕ ячĕ ăшăтса.
Хĕвел савать тĕнчене,
хĕл ыйхинчен вăратса.
Тĕттĕм вăрман чĕрĕлет,
ешĕл тумтир тăхăнать.
Çеçен хир те ешерет,
илемĕпе мухтанать.
Тĕрлĕ-тĕрлĕ чечексен
ырă шăрши сарăлать.
Пур çĕрте те кайăксен

лайăх юрри янăрать.
Çӳлте пĕлĕт айĕнче,
тăри юрри илтĕнет.
Çемçе курăк çиййĕнче
путек-сурăх сиккелет.

## Трактор.

Çывăрнă çĕртех Ваçук хăлхине темĕскер кĕр-кĕр! тенĕ сасă кĕрсе кайрĕ. Ваçук, вырăн çинчен сиксе тăрса, чӳречерен пăхрĕ. Кĕрленĕ сасă çывхарсах пырать.

Ваçук урама чупса тухрĕ. Урамра халăх туллиех. Ваттисем те, ачасем те пухăннă. Ваçук вĕсем патне чупрĕ. Çав вăхăтрах уй хапхинчен темĕнле машинăсем хыттăн кĕрлесе кĕчĕç.

— Ара, ку трактор-çке!—терĕ Ваçук, чухласа илсе.

Ваçук халăх ушкăнне пырса тăчĕ. Çав вăхăтра митинг уçăлчĕ. Пĕр хура çӳçлĕ çын трактор çине хăпарса тăчĕ те колхозниксене салам каларĕ.—Машина-трактор станцийĕ сирĕн колхоза ака тума тракторсем ячĕ. Çуракине ăнăçлă ирттерĕр,—терĕ.

Унтан колхоз правлени председателĕ тухса каларĕ. Вăл машина-трактор станцине тракторсене вăхăтра янăшăн тав турĕ.

---

Çывăрнă çĕртех Ваçук мĕн сассине илтнĕ? Тракторпа колхозра мĕнле ĕçсем тăваççĕ?



## Хурçă ут.

Кĕр-кĕр-кĕр! кĕрлерĕ трактор.
Тухрĕ вăл колхоз хирне.
Тĕпренех пуçларĕ паттăр
çавăрма тăпрасене.
Сухапуç чысне çухатрĕ,—
машинлатпăр уйсене.
Хурçă ут тухса аркатрĕ
ĕмĕрхи йăрансене.
Хурçă ут чупать хир урлă,
хир питне чĕлет, сĕвет.
Машинăпа акнă тырпулă
уйсене илем кӳрет.

## Пыл хурчĕсен юрри.

Ылттăн çунатпа
йăл-йăл курăнса,
вĕл-вĕл вĕçетпĕр
колхоз садĕнче.

Ылттăн çуркунне,
чаплă çуркунне...
ытармалла мар
сана, çуркунне.



Хитре чечексен
пылĕсене ĕçсе,
пинĕ-пинĕпе
çӳретпĕр вĕçсе.

Ылттăн çуркунне,
чипер çуркунне...
ытармалла мар
сана, çуркунне.

## Фабрикăсемпе заводсем.

Марукăн пиччĕшĕ шкулта вĕренет. Пĕрре Марук пиччĕшĕнчен ыйтать.

— Пирĕн колхозăн тимĕрç лаççинче пур япала та тăваççĕ. Çав трактора мĕнле тăваймаççĕ вара,—тет.

Пиччĕшĕ Марука ăнлантарса парать.

— Трактора тимĕрç лаççинче тумаççĕ. Ăна машинăсемпе ĕçлесе тăваççĕ. Кашни



пайне уйрăм машина тăвать. Машинисем пысăк çуртсенче ларaççĕ. Çав пысăк çуртсене фабрика е завод,—теççĕ.

Фабрикăсенче темĕнле япала та туса кăлараççĕ. Акă эсĕ тăхăннă кĕпене фабрикăра машинăсемпе тĕртсе кăларнă çитцăран çĕленĕ. Кĕпе хуралсан, заводра тунă супăньпе çуса тасататпăр. Самовара та заводра тунă.

Заводсенче рабочисем ĕçлеççĕ. Вĕсем пирĕн пек тырă-пулă акса тумаççĕ. Эпир тырра государствăна сутатпăр. Государство çав тырра рабочисене сутать. Рабочисем туса кăларнă япаласене эпир кооперативсем урлă илетпĕр. Çапла колхозпа хула пĕр-пĕрне пулăшса тăраççĕ.

---

Сирĕн колхозра фабрикăра, заводра туса кăларнă мĕнле япаласем пур?

## Эпĕ хула курни.

Манăн хулана пит кайса курас килетчĕ. Пĕрре мана атте хăйпе пĕрле Шупашкара илсе кайрĕ.

Эпĕ, савăннипе, вăрăм çула сисмерĕм те. Кĕçех хулана çитсе те кĕтĕмĕр.

Хулана пырса кĕнĕ çĕрте урамăн икĕ айăккипе пĕр пек илемлĕ çуртсем ларaççĕ.—Кунта рабочисем пурăнаççĕ,—терĕ атте. Хула варнелле кĕнĕçемĕн ик-виç хутлă çуртсем нумайлана пуçларĕç.

Пĕр пысăк тăвата хутлă çурт тĕлне çитрĕмĕр. Кăна Пичет çурчĕ теççĕ. Кунта хаçатсем, журналсем, кĕнекесем кăларса тăраççĕ,—терĕ атте.

Атте мана хула тăрăх нумай кăтартса çÿрерĕ. Театр çуртне, Чăваш правительстви çуртне куртăмăр. Атăл хĕрне çитрĕмĕр. Пристаньсен çумĕнче пароходсем тăраççĕ. Атăл хĕррине пынă чух темĕскер хыттăн кăшкăртма пуçларĕ. Ку — завод сасси пулнă иккен.

Хулара автомобильсем, автобуссем питĕ йышлă. Автобус çине эпир те ларса куртăмăр.



## Автобус.

Тÿрĕ, тикĕс çулпала,
пĕр автобус вĕçтерет.
Хăйне ирĕк çул пама
вăл таçтанах систерет.
Ту-ту-ту! Ту-ту-ту!
Таптанатăн вĕт, асту!

Ай-хай лаши хăраса
çул айккипе сиктерет.
Автобусĕ васкаса
тата хытă вĕçтерет.
Ту-ту-ту! Ту-ту-ту!
Çулна лайăхрах асту.



## Пĕр ĕç.

Унтрипе Ахмет пĕрне-пĕри пĕлмеççĕ.

Унтри Мускавра пурăнать. Вăл çитцă тĕртекен фабрикăра ĕçлет.

Ахмет Туркестанра пурăнать. Вăл хирте ĕçлет, çĕрмамăкĕ акса ӳстерет.

Унтрипе Ахмет Совет Союзĕнче тĕрлĕ выранта пурăнаççĕ. Вĕсем кашни ăрасна чĕлхепе калаçаççĕ.

Вĕсем пĕр-пĕринчен питĕ инçетре пурăнаççĕ пулин те, пĕр ĕçех тăваççĕ—çитцă тăваççĕ.

Ахмет колхозра çĕрмамăк ӳстерет. Унтри Мускавра çĕрмамăкĕнчен çитцă тĕртсе кăларать.

## Пионерка çĕрмамăк пухма вĕрентнĕ.

Кăнтăр енче, пит аякра, Таджикистан ятлă çĕршыв пур. Унта колхозниксем нимрен ытла çĕрмамăк акса тăваççĕ. Мамăк пулса çитсен, ăна алăпа пуçтарса кĕртеççĕ.

Ĕлĕк çĕрмамăкне хăрах алăпа пухнă. Çапла майпа çитĕнсе çитнĕ колхозниксем те кунне 30-шар килограмм çеç пухса пынă. Çамрăк пионерка Мамлакат Нахангова икĕ алăпа пухма тытăннă. Вăл малтанхи кунсенчех 50-шар килограмм пуха пуçланă, каярахпа 90-шар, 100-шер килограма çитернĕ.

Халĕ ĕнтĕ ытти колхозниксем те çĕрмамăкне Мамлакат пек пухма тытăннă. Совет правительстви Мамлакат Нахангована Ленин орденĕ парса наградăланă.

## Колхоз пурлăхĕшĕн.

Колхоз çуртырри вăрлăхне тасатса хатĕрлерĕ. Вăрлăха кĕлете турттарса хучĕ те Çтаппан пиччене хурал тăма хушрĕ.

Халăх тăшманĕсем колхоз вăрлăхне вăрласшăн. Анчах мĕнле вăрлас? Çтаппан пиччене кĕлет умĕнчен аяккалла мĕнле уйăрса ярас?

Хайхи тăшмансем Çтаппан пичче пӳртне вут тĕртме шутлана. Хăй çурчĕ çуннине курсан, чупсах кайĕ, тенĕ вĕсем.

Çтаппан пичче вăрлăха сыхлать. Каçĕ ытла та лăпкă. Пĕр сас-чĕвĕ те çук. Сасартăк çынсем кăшкăрашни илтĕнчĕ. Пушар çулăмĕ пĕтĕм яла çутатса ячĕ. Халăх чупкалать. Вăл Çтаппан пӳрчĕ еннелле васкать.



Анчах тăшмансен ĕçĕ тухмарĕ. Çтаппан пичче кĕлет умĕнчен каймарĕ. Вăл çаплах вăрлăха сыхласа тăчĕ. Унăн пĕтĕм пурлăхĕ çунса кайрĕ. Çапах та вăл колхоз вăрлăхне çаратма памарĕ.

Колхоз Çтаппана преми пачĕ: çĕнĕ пӳрт лартса пачĕ, тĕрлĕ тумтирсем илсе пачĕ.

## Пирĕн колхоз мĕн акса тăвать.

Пирĕн колхоз тĕрлĕ тырпул акса тăвать. Колхозниксене çиме, государствăна сутма тата ваккăн сутма ырашпа тулă

акать. Выльăхсем валли сĕлĕ акать. Хăйĕнчен ытлашши сĕлле государствăна сутать.

Пир-авăр тума йĕтĕнпе кантăр акса тăрать. Тата колхоз табакпа çĕрулми лартса ӳстерет. Пăрçа, клевер, вика, хуратул акса тăвать.

Çимĕç пахчинче тĕрлĕрен çимĕç лартса тăвать. Хăяр, помидор, нимĕç пăрçи, çарăк, кишĕр, сухан, выльăх кăшманĕ лартать.




## Ĕç уявĕ.

Пурте тухăр тумланса,
тухăр капăр.
Паян майăн уявне
уявлатпăр.
Паян пурте савăнатпăр
чаплă куншăн.
Ялавсем йăтса утар
эпир уншăн.
Кирлĕ мар пире мăнкун—
тĕн уятавĕ.

Пирĕн çĕнĕ аслă кун—
Май уявĕ.
Пурте тухăр тумланса,
тухăр капăр.
Паян майăн уявне
уявлатпăр.

## Майăн пĕрремĕш кунĕ.

Паян пирĕн май уявĕ ячĕпе митинг пулчĕ. Митингра пĕр ватă рабочи пире май праçникĕ çинчен каласа пачĕ.

— Май уйăхĕн пĕрремĕш кунĕ вăл— пĕтĕм тĕнчери пролетарисен уявĕ. Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем çак кун хăйсен вăйĕсене тĕрĕслеççĕ. Капитализмлă çĕршывсенче пролетарисем буржуазине хирĕç кĕрешме вăй пухаççĕ. Çав кун пĕтĕм тĕнчери ĕçхалăхĕ урама уяв тума тухать. Вăл уяв пролетарисем пĕрле кĕрешсе, капитализм пусмăрĕнчен ирĕке тухассине пĕлтерет.

Патша вăхăтĕнче пирĕн государствăра май уявне уявлама ирĕк паман. Майăн пĕрремĕшĕнче праçник тунăшăн патшапа капиталистсем рабочисене питĕ хытă хĕстернĕ. Вĕсен йыттисем—жандармсем—праçник тăвакансене пăшалсемпе пере-пере салатнă, саламатсемпе хĕненĕ, тĕрмене тытса хупнă.

Анчах темĕнле хĕн пулсан та, Российăри рабочисем Майăн пĕрремĕшне 1889-мĕш çултанпа кашни çулах уявланă. Жандарм-

сем курасран митингсене вăрманта е ытти ҫĕрте пытанса туса ирттернĕ. Жандармсем сасартăк пырса тытасран хурал тăратнă.

Халь, Октябрьти социализмлă революци пулнăранпа, эпир май уявне ирĕклĕн савăнса уявлатпăр. Вăл кун кашни ҫулах хамăр тунă ҫитĕнӳсене шута илсе тĕрĕслетпĕр. Ют ҫĕршыври рабочисемпе ҫыхăнăва ҫирĕплетсех пыратпăр.

---

Майăн пĕрремĕшĕ камсен уявĕ? Ҫак кун пролетарисем мĕн тăваҫҫĕ? Эсир май уявне мĕнле ирттертĕр? Ăҫта тухса ҫӳрерĕр? Мĕн-мĕн куртăр? Мĕнле юрăсем юрларăр? Шкулта мĕн турăр?

## Вăрмана кайни.

Ҫуркунне пире учитель ҫывăхри вăрмана илсе кайрĕ. Вăрманăн ҫуркуннехи пурăнăҫне сăнаса ҫӳрерĕмĕр. Вăрманта сывлăш ялти пек мар, таса, калама ҫук уҫҫăн туйăнса кайрĕ.

Вăрмантан эпир йывăҫ турачĕсем касса килтĕмĕр. Вĕсене кĕленче ăшне хăшне шывпа, хăшне шывсăр лартрăмăр. Вара ҫаксене сăнаса пĕлтĕмĕр.

Кашни йывăҫăн туратсем пур. Турат ҫинче папаккисем пур. Папаккисем ăшĕнче пĕчĕк ҫулҫăсем пур. Хĕллехи вăхăтра вăл ҫулҫăсем хытă хупăпа чĕркенеҫҫĕ. Ҫуркунне, нӳрпе тата хĕвел ăшшипе кӳпчесе, хуппине сирсе яраҫҫĕ те симĕсленме пуҫлаҫҫĕ.

Çапла вара йывăçсем çулçă кăларса симĕсленеççĕ.

---

Вăрмана кайса йывăç турачĕсене касса илсе, шыв тултарнă кĕленче ăшне лартăр. Туратсене мĕн вăхăтра лартнине, хăш турат миçе кунтан çулçă сарнине сăнаса çырса пырăр.

## Хăраманскер.

Сергейпе Павăл вăрмана каяççĕ. Çул çинче Сергей Павăлран ыйтать.

— Павăл, эсĕ кашкăрсенчен хăратăн-и?—тет.

Павăл мухтанать.

— Мĕн хăрамалли пур вĕсенчен? Чукмарпа пуçĕсенчен парăп та вĕлерсе хурăп,—тет.

Вăрмана кĕчĕç хайхисем. Вăрманта тĕттĕм, йывăçсен хӳттипе хĕвел те курăнмасть. Утса пынăçемĕн ура айĕнче вĕтĕ хăрăк туратсем шăтăртатаççĕ, çулçăсем чăштăртатаççĕ.

Павăл хыçалалла çавăрăнса пăхкаласа илет, Сергей аллинчен яра-яра илет.

Сергей ăна калать:

— Хăратăн-им?—тет.

Павăл хăрасса хăрать, анчах хăй хăранине палăртасшăн мар—вăтанать.

— Мĕн хăрамалли пур, эпĕ пĕчĕк ача мар вĕт,—тет.

Çав вăхăтра Сергей Павăла хăратмашкăн юриех:

— Кашкăр пур!—тесе кăшкăрса ячĕ. Павăл хăранипе тӳрех пĕшкĕнсе ларчĕ:

— Анне-е!—тесе çухăрса ячĕ.

Сергей унтан кулать:

— Эх, Павăл, хăраманскер,—тет.

## Атте пахчи.

Атте пахчи, улма пахчи—улмалăх.
Улми пиçет, хĕрелет,
пире çиме илĕртет.

Айтăр каяр, халех каяр пахчана,
улми пире кĕтет-çке,
татса çиме чĕнет-çке.

## Пахча тăшманĕсем.

Май уйăхĕн вĕçнелле пирĕн шкул пахчине çарăк, тĕрлĕ çимĕçсем сип-симĕс шăтса тухрĕç. Эпир вĕсене шăваратпăр. Çумкурăк шăтсанах, ăна кăкласа тăкатпăр. Çимĕçсем лайăх ӳсни пире савăнтарать.

Анчах пахчана чăх-чĕпсем кĕрсе йăрансене пăса пуçларĕç. Вĕçен кайăксем те пыра-пыра çамрăк калчана сăхса илеççĕ.

Чăхсенчен хăтăлма пахча картине çӳлĕрех тытрăмăр.

Кайăксене хăратма йăран çине катемпи лартрăмăр. Тин вара пирĕн йăрансем пăсăлми пулчĕç.

Пирĕн çимĕçсем вăй илсе илемлĕн ешерме те пуçланăччĕ. Унччен те пулмарĕ,

вĕт хурт тапăнса, ҫамрăк ҫулҫăсене пĕтере пуҫларĕ. Мĕн тăвас? Ҫуллахи ҫанталăкра хурткăпшанкă питĕ шутсăр ĕрчет. Вĕсене часрах пĕтермелле.

Ку тăшмана пĕтерме учитель эмел илчĕ. Купăста айне, ҫарăксем хушшине кĕл сапса тухрăмăр. Учитель эмелне сапрĕ. Вĕт хурт пĕтрĕ.

## Вăрманти ҫил-тăвăл.

Шавлать, кашлать сĕм вăрман,
вĕҫĕ хĕрри курăнмасть.
Асар-писер ҫил тухсан,
чарăнассăн туйăнмасть.

Тапхăр-тапхăр ҫил килет,
пăлтăр-палтăр ҫавăрса.
Тĕттĕм вăрман ӳхĕрет,
ҫĕре ҫитех авăнса.

Хура пĕлĕт пĕрмаях
шăвать вăрман тăрринче;
ярать ҫиҫĕм ҫĕр ҫурсах
хура пĕлĕт хушшинче.

Аҫа ҫапать, шартлатать,
пĕтĕм тĕнче кисренет.
Ҫумăр ҫырма пек юхать,
лупашкасенче кĕрлет.



## Çулла.

Çулла. Июнь уйăхĕн пуçламĕшĕ. Хĕвел кунĕ-кунĕпех пирĕнпе вылять. Ĕçленĕ çĕрте те вăл пирĕнпех.

Ирхине тăрсан, хĕвел çуттинче сывлăм йăлтăртатни хаваслантарать. Сывлăм çутă шăрçа пек курăк çинче чĕтресе ларать.

Сывлăм çинче колхоз кĕтĕвĕ йĕр туса кайнă.

Урамăн икĕ енче хурăнсем, йăмрасем сарăлса ларaççĕ. Йывăççен айĕнчен хăма е черепица витнĕ çуртсем курăнаççĕ. Вĕсем—пирĕн колхозăн çурчĕсем.

Хирелле тухсан, тырă-пулă çитĕннине курса савăнатăн. Пахчасенче тĕрлĕ çимĕçсем ӳсеççĕ. Çырла пиçет.

Ыран-паянах вăрмана икĕ эрнелĕх лагере каятпăр. Унта эпир сывлăха тĕреклететпĕр. Гимнастика тăватпăр. Шыва кĕретпĕр. Хăйăр çинче выртса хĕвелпе пиçетпĕр. Вăхăтра апат çиетпĕр.



**Хӗвел, шыв, таса сывлӑш—сывлӑх тусӗсем. Хӗвелпе пиҫер. Шыва кӗрер. Таса сывлӑшра выляр. Сывлӑхлӑ пулар.**

## Ҫуллахи ӗҫсем.

Колхозӑн ҫулла ӗҫ питӗ нумай.

Ҫимӗҫ пахчинче тӗрлӗ ҫимӗҫсем ҫитӗнеҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах ҫумкурӑкӗ те ӳсет. Ана ҫумласа пӑрахмалла. Ҫӗрулмине купаламалла. Хӑяр пулать. Пулса ҫитнӗ хӑярсене пуҫтармалла. Пасара илсе тухмалла.

Улӑхсенче курӑк ҫитӗнет. Акӑ часах колхозниксем утӑ ҫулма та тухӗҫ. Ҫӳллӗ симӗс курӑка ҫивчӗ ҫавапа е машинӑпа ҫулса пӑрахӗҫ. Типӗтсе капансем туса хурӗҫ.

Утӑ ҫулса пӗтернӗ ҫӗре ыраш пулса ҫитет. Ыраш вырмалла. Хӑш чухне тата

ыраш вырса пĕтеричченех сĕлĕ те пулса çитет.

Ĕçĕ нумай пулин те, халь колхозра ĕçлеме çултан çул çăмăлланса пырать. Чылай колхозсенче халь сухана тракторсемпе тăваççĕ. Тырра комбайнпа выраççĕ. Комбайн вырать, çапать, çавăнтах сăвăрса та пырать.



## Утă туни.

Шап-шур халăх ут çулать.
Унта-кунта çын сасси.
Çава вăш-вăш вăшкăнать,
улăхĕпе ун сасси.
Халăх çăмăл калаçать,
пур ĕç çынĕ хĕпĕртет.
Хĕвел кулса çутатать,
çулнă утта типĕтет.
Вăрман, пуçне пĕшкĕртсе,
сивĕ сывлăш кăларать.
Утă çулан çынсене
тартан-шуртан хăтарать.

# Панулми.



Ытла аван ку улма!
Ҫап-ҫаврашка, тап-таса,
тутлă шăршлă, йăмăх
хĕрлĕ,
пыл тултарнă тейĕн ҫав!
Вăрри витĕр курăнать.

# Ҫырма.

Ҫырма юхать кĕрлесе,
аслă ялăн ҫумĕпе.
Хĕвел тĕрĕ тĕрлесе,
вылять унăн шывĕпе.
Тăрă шывăн ăшĕнче
кăвак пĕлĕт явăнать.
Ватă йăмра тайăлса,
тĕснепăхсасавăнать.
Акă кĕпер ҫийĕнче
пулăҫ ларать вăлтапа,
йăпăрт-йăпăрт пуллине
улталасшăн ăманпа.

---

**Тупмалли юмах:** Ҫунатлă—вĕҫеймест, ури ҫук—хăваласа тытаймăн.

# Ҫуллахи ҫанталăк.

Ҫулла кун питĕ вăрăм. Июнь уйăхĕнче кун ҫĕртен икĕ хут ытла вăрăмрах. Хĕвел нихăҫанхинчен ҫӳле хăпарать. Кăнтăрла тĕлĕнче вăл пĕлĕт тӳпинех ҫывхарать. Ҫавăнпа япаласен мĕлки кĕске пулать.

Шывра та, вăрманта та, хирте те пурăнăҫ вĕрет. Шывра пулăсем, тĕрлĕ хуртсем, шапасем ишсе ҫӳреҫҫĕ. Унтах тата рак та пурăнать.

Вăрманта тĕрлĕ йывăççем çитĕнеççĕ: юман, хурăн, вĕрене, шĕшкĕ, хурама, çăка, чăрăш, хыр. Çырласем, кăмпасем ӳсеççĕ.

Шурлăхра хăях-хăмăш, мăк ӳсет.

Хирте тĕрлĕ курăк ӳсет, тырă-пулă пулса çитĕнет.

Çавăнтах тата пире сиенлĕ çумкурăкĕсем те ӳсеççĕ: пиçен, хурхух, йытпырши, чăрăш тăрри. Вĕсене эпир çумласа тăратпăр.

## Çулталăк хушши.

Шурă юр ирĕлет,
çеçен хир чĕрĕлет,
ешĕл курăк ӳсет...
Вăл хăçан пулать?

Хир илемĕ каять,
сĕм вăрман çаралать,
пĕрмай çумăр çăвать.
Вăл хăçан пулать?

Хĕвел хытă хĕртет,
ăшă çил вĕркелет...
сар ыраш çитĕнет...
Ку хăçан пулать?

Хирсенче юр анчах,
çырмара пăр анчах,
сивĕтет аванах...
Ку хăçан пулать?

---

### Çулталăкри уйăхсем:

Январь, февраль, март, апрель, май, июнь, июль, август, сентябрь, октябрь, ноябрь, декабрь.

### Тупмалли юмахсен тупписем.

7 страница: Юр.
11 страница: Пăр.
13 страница: Çăматă.
15 страница: Юр.
40 страница: Лаша.
43 страница: Лаша.
47 страница: Йытă.
49 страница: Кашкăр.
72 страница: Чĕкеç.
93 страница: Пулă.

---

## ТУПМАЛЛИ.


| | стр. |
|---|---|
| Хĕллехи ир | 3 |
| Шкула | 4 |
| Санăн вĕренме каймалла | — |
| Ăмăрту | 5 |
| Хĕл (юмах) | 6 |
| Çапла-и, çапла мар-и? | 7 |
| Конькипе | — |
| Кая юлчĕç | 8 |
| Ёлка | 9 |
| Пирĕн ёлка | — |
| Шывран кĕленче туни | 11 |
| Çунашка | 12 |
| Плотниксен юрри | — |
| Урамра | — |
| Хĕллехи тумтир | 13 |
| Юртан кĕлетке туни | 14 |
| Ăшăтман кĕрĕк | — |
| Ванюк кĕпи | 16 |
| Йĕлтĕрпе | — |
| Юр айне пулнă çын | 17 |
| Колхозсен хĕллехи ĕçĕсем | 18 |
| Хĕллехи каç | 19 |
| Икĕ колхозник | — |
| Владимир Ильич Ленин | 20 |
| 1924-мĕш çулти январĕн 21-мĕшĕ | 23 |
| Иосиф Виссарионович Сталин | 24 |
| Сыхлăхра | 28 |
| Паттăр Хĕрлĕ Çар | 29 |
| Ворошилов патне янă çыру | 30 |
| Чапаев | 31 |
| Паттăрсен юрри | 32 |
| Пирĕн чикĕсем хĕрринче пурăнакан пионерсем | — |
| Чкалова асăнса | 34 |
| Самолёт çинче урайисене çŭлелле тăратса | 35 |
| Октябрятсем | 36 |
| Ачасене чĕнсе юрланă юрă | 37 |
| Пирĕн колхоз | 38 |
| Лаша ĕçĕ | 39 |
| Лаша мĕн ĕçлет | 41 |
| Лашана лайăх пăх | — |
| Ĕне | 42 |
| Сыснасем | 43 |
| Пĕл: мĕн вăл | 44 |
| Автан | — |
| Кролик | 45 |
| Кушакпа йытă | 46 |
| Ак япала | 48 |
| Кашкăр | — |
| Упа | 49 |
| Пакша | 51 |
| Кайăксене ан тытăр | 52 |
| Пĕрре суйсан, тепринче ĕненмеççĕ | — |
| Вĕреннĕ шăнкăрч | 53 |
| Тухтăр патĕнче | 54 |
| Таса пурăнма вĕрен | 55 |
| Юмăç пĕтерет, тухтăр пулăшать | 56 |
| Сивĕ енче | 57 |
| Пăлан | — |
| Пăрсем хушшинче | 58 |
| Челюскинецсем | 59 |
| Тăхăр уйăх пăр çинче | 62 |
| «Седов» ледокол | 63 |
| Тăван çĕршыв | 64 |
| Ăшă енче | 65 |
| Слонпа унăн çури | 66 |
| Çуркунне пулать | 67 |
| Тавлашу | 68 |
| Тумтир улшăнать | 69 |
| Тимĕрç | 70 |
| Çуркунне | 71 |

| | стр. | | стр. |
|---|---|---|---|
| Шăнкăрч . . . . . . . . . . | 72 | Ĕç уявĕ . . . . . . . . . | 84 |
| Пăр кайни . . . . . . . . . | — | Майăн пĕрремĕш кунĕ . . | 85 |
| Сентти . . . . . . . . . . . | 74 | Вăрмана кайни . . . . . . | 86 |
| Миша шыв армане туни . | 75 | Хăраманскер . . . . . . . | 87 |
| Çуркунне . . . . . . . . . . | — | Атте пахчи . . . . . . . | 88 |
| Трактор . . . . . . . . . . | 76 | Пахча тăшманĕсем . . . . | — |
| Хурçă ут . . . . . . . . . | 77 | Вăрманти çил-тăвăл . . . . | 89 |
| Пыл хурчĕсен юрри . . . | — | Çулла . . . . . . . . . | 90 |
| Фабрикăсемпе заводсем . . | 78 | Çуллахи ĕçсем . . . . . . | 91 |
| Эпĕ хула курни . . . . . | 79 | Утă туни . . . . . . . . . | 92 |
| Автобус . . . . . . . . . | 80 | Панулми . . . . . . . . . | 93 |
| Пĕр ĕç . . . . . . . . . . | 81 | Çырма . . . . . . . . | — |
| Пионерка çĕрмамăк пухма вĕрентнĕ . . . . . . . . | — | Çуллахи çанталăк . . . . | — |
| Колхоз пурлăхĕшĕн . . . . | 82 | Çулталăк хушши . . . . . | 94 |
| Пирĕн колхоз мĕн акса тăвать . . . . . . . . . . . | 83 | Çулталăкри уйăхсем . . . | — |
| | | Тупмалли юмахсен тупписем . . . . . . . . . . . | — |

---

Редактор *М. Р. Романов.* Техредактор *Ф. Я. Яковлев.*

Послано в производство 8/IV—40 г. Подп. к печ. 18/VII—1940 г. Ф. б. 60×92/16. Печ. лис.—6. Тираж 45.000 экз. Заказ № 266. Уп. Чувашглавлита № 1488.

Типография № 1 Наркомместпрома ЧАССР, г. Чебоксары, Дом Печати.

Цена 70 коп.

А. С. ОТАЧКИН

# КНИГА ДЛЯ ЧТЕНИЯ

ЧАСТЬ ПЕРВАЯ

ЧУВАШИЗДАТ ✶ 1940